Николай Угарин

# ЮНЛАННĂ ПĔРКЕНЧĔК

*Драма*

Драмăри çынсем:

Караççăм – утмăлсенчи кĕрнеклĕ арçын

Елис – унăн арăмĕ

Маруç - весен хĕрĕ, вăтăрсене çывхарать

Аня – вĕсен кĕçĕн хĕрĕ, 22 çулта

Ирина – вçĕсен кинĕ

Игорь – хула каччи

Костя – ял каччи

Хветуç - кӳршĕ хĕрарăмĕ

**1 пайĕ.** *Караççăм çур-йĕрĕ, сад пахчинче улмуççи йывăçĕсем курăнаççĕ. Çулла. Çанталăк каç енне сулăннă. Хаваслăн шавласа Аняпа Игорь килеççĕ, весен аллисенче сумкасем, магнитофон.*

**Аня.** Акă çитрĕмĕр те. Паллаш, Игорь, ку пирĕн ял. Çак çуртра эпĕ çуралнă, çак сад пахчинче выляса ӳснĕ, çав кӳлĕре кăвакал пек чăмпăлтатса шыва кĕнĕ.

**Игорь**. Илемле сирĕн тавралăх.

**Аня.** Килĕшет-и? Мана та питĕ килĕшет. Ав çавăнта, кӳлĕ леш енче, пирĕн çăкалăх. Эпир унта юлташсемпе уçăлма çӳреттĕмĕр. Çăка чечеке ларсан вара вăрмантан тухас та килмесчĕ. Пĕлетĕн-и, Игорь, мĕн тери ырă çăка чечекĕн шăрши.О, шăршласа тăранаймастăн. Эсĕ çăка чечекĕнчен пĕçернĕ чей ĕçсе курнă-и.

**Игорь.** Çук, пирвайхи хут илтетĕп кун пирки.

Аня. Унран тутлă чей çук та пулĕ. Пыл яма та кирлĕ маар, ахалех пыл тутти калать. Каяттăмăр та вара хĕрсемпе çавăнта, пĕр-пĕр йывăç айне выртаттăмăр. Кайăксем юрлатчеç, вĕлле хурчĕсем нăйлататчĕç.Çӳлте вара мăнтăр пĕлĕтсем шуса иртетчĕç. Мамăк купи евĕрех туйăнатчĕç вĕсем. Манан çав пĕлĕтсем çинее утланса аякка-аякка телей шырама каяс килетчĕ. Ĕмĕтсем, ĕмĕтсем... Мĕн çинчен кăна ĕмĕтленмеспĕр-ши эпир çамрăк чухне. Ĕмĕрне те телейсĕр пулассăн туйăнматсче. Çул айккинче выртакан чул муклашкисем те питĕ илемлĕн туйăнатчĕç ун чух.

**Игорь.** Аня, эсĕ хăвна телейсĕр тесе шутлатăн-и.

Аня. Çук, сăмах май çеç каларăм. Игорь, пĕр калаçма тытăнсан ытлашшипех калаçатăп пулас эпĕ. Сӳпĕлти тесе ан шутла мана пирки. Эпĕ нихăçанхинчен те телейлĕ паян. Çил ачине хăвалас килет, лĕпĕш пек çăмăллăн вĕçес килет, брлас килет, ташлас килет манăн, Игорь!

**Игорь.** Сирĕн кăмăла тивĕçтерме яланах хавас эпир, сеньора! *(Магнитофон ярать.)*

**Аня.** Игорь! Тусам, телейĕм, юратăвăм эсĕ манăн!

*Аняпа Игорь ташлама тытăнассĕ. Кашт ташласан Аня пырса магнитофоне чарать.*

**Игорь.** Ма чартăн. Атя тата ташлатпăр.

**Аня.** Çук, кайран вали хăвар. *(Пауза.)* Игорь, кала-ха пĕр тунмасăр: сана манпа чăнласах та лайăх-и?

**Игорь.** Чăнласах.

**Аня.** Чăнласах та мана юрататăн-и?

**Игорь.** Чăнласах.

**Аня.** Чăнласах манна качча илетĕн-и?

**Игорь.** Ма ыйтатăн. Веçех калаçса татăлтăмăр-çке.

**Аня** *(сумкинчен фата кăларать те пуçĕ тăррине тытать).* Чăнласах та эпĕ çак фата айĕнче санпа юнашар ларăп-ши. Ĕненес те килмест.

**Игорь.** Аня, мĕн тери хитре вĕт-ха эсĕ, фата айĕнче пушшех те. Акă аçу-аннӳпе калаçатпăр та, туй тăватпăр.

**Аня.** Игорь, мĕлетĕн-и пĕркенчĕк айĕнче мĕн тăваççĕ.

**Игорь.** Мĕн?

**Аня.** Çавна та тавçăраймастăн-и. Йӳçĕ.

**Игорь.** Пĕрлешичченех пĕркенчĕк айăнче чуптăвăнсан телей пулмассине пĕлетĕн-и эсĕ.

**Аня.** Эсĕ тĕшмĕш йĕркине те ĕненетĕн-и? Йӳçĕ Мана, Игорь, йӳçĕ.

**Игорь.** Эх, Аня! *(Аняна пырса чуптăвасшăн, леш тарать, Игорь ăна хăваласа тытса чуптăвать.)*

**Аня.** Йӳçĕ, йӳçĕ...

**Игорь.** Татах йӳçĕ-и. пылаклатар. *(Татах чуптавăнаççĕ.)*

**Аня.** Игорь, ĕмĕтĕм эсĕ манăн, юратăвăм...

**Игорь**. Аня...

Аня. Çитет, шав иртĕхмеççĕ, атту чăнласах та йӳçĕ пулма пултарать.

**Игорь.** Нихăçан та, пирĕн яланах лайăх пулать. Ваттисем калашле: пыл та çу.

**Аня.** Игорь, кала-ха, эсĕ астрологсем каланине ĕненетĕн-и?

**Игорь.** Ĕненетĕп.

**Аня.** Эпĕ ĕненместĕп. Тĕрĕссипе каласан вĕсем каланă пекех пулса пырать ман пурнăç, çавăнпах ĕненес килмест те. Ним лайăххине те шантармаççĕ вĕсем мана.

**Игорь.** Апла ан ĕнен. Кашни çын пурнăçне ăçтан пĕлччĕр-ха вĕсем.

Аня. Вĕсем каланине ĕненсен манăн кăçал...

**Игорь**. Ан пăтрат пуçна кирле марпа. Веçех лайăх пулать.

**Аня** *(аякка пăхса).* Ой, ачасем кӳлĕре мĕнле чăмпăлтатаççĕ. Мĕн тери хаваслă вĕсем, телейлĕ, пĕр шухăшсăр пурăнаççĕ. Пĕчĕк чухне эпĕ те çавах пулнă. Эх, арçын ачсемпе вăрçăлла выляма юрататтăмăр. Çитмен çĕр, улăхман вырăн хăвармастăмăр. Таçта та хăпарса кĕпе аркисене те çурса пĕтереттĕм. Арçын ачаран пĕрре те кая мар тетчĕç мана. *(Пауза.)* Игорь, мĕншĕн эсĕ ху çинчен нимĕн те каласа памастăн?

**Игорь.** Эпĕ киленсех эсĕ каласа панисене итлетĕп. Манăн яланах сан сассуна илтес килет. Хам çинчен каласа пама, эп сан пек улах вырăнта ӳсмен. Саăнăçлах пулман манн ачалăх. Тăван аттесĕр, ют арçынсемпе... Аса та илес килмест. Хăçан та пулин тен каласа парăп.

**Аня.** Ой, эпĕ сана çул çинчен апат çитерме те манса кайнă. Хăть чей вĕретсе ĕçтерем. Килте те пĕр сас-чӳ те çук. Ăçта кайса пĕтнĕ-ши вĕсем? Атя пӳрте кĕретпĕр.

**Игорь.** Эсĕ кĕр, эпĕ кăштах ялти уçă сывлăшпа сывласа тăранам-ха. Ну, апла пулсан пахчари сĕтел хушшине ларсах чей ĕçĕпĕр. Кĕр сад пахчине, панулми татса çиме пултаран.

*Аня пӳртне кĕрсе каять, Игорь пĕр хушă таврана пăхса саврăннă хыççăн улмуççи патне пырса панулми татса илет, çиме пуслать.*

**Игорь.** Ой, хуртлă *(панулмине сетел çине хурать.)*

*Урампа Костя иртсе пырать, Игоре аякран сăнаса тăрать.*

**Костя.** Салам.

**Игорь.** Салам.

**Костя.** Эсĕ кам пулатăн?

**Игорь.** Эпĕ? Игорь.

**Костя.** Ятна ыйтмастăп эпĕ *(пуçне пӳрт енне сĕлтсе).* Çав тринкки-тринкки сиккелекен пикеешĕн кам пулатăн тетĕп.

**Игорь.** Юлташ, савни теме те юрать. А эсир кам пулатăр?

**Костя.** Эпĕ унăн венчете тăман упăшки пулатăп. Е ман çинчен нимĕн те илтмен-и, «савни».

**Игорь.** Çук, илтмен, каласа пама ĕлкĕреймерĕ пулас.

**Костя**. Ну-ну, ан шăртлан, эп шӳтлесе çеç.

**Аня** *(тухать).* Игорь, кампа калаçатăн эсĕ кунта? *(Костяна асăрхаса.)* Костя? Мĕнле, халех? Хăçан таврăннă вара эс?

**Костя** *(Аня патне пырса).* Ну, здравствуй. Çынсем пĕрне-пĕри тĕл пулсан сывлăх сунаканччĕ ăна. Е хулара урăхла вĕрентеççĕ-и сире?

**Аня** *(кăмăлсăр).* Здравствуй.

**Костя.** Чипер-чипер майра пулса кайнă эсĕ. Кунран-кунах чиперленсе пынă иккен эпĕ çук чухне. Сан çинее пăхсан куçа илейместĕн. Кăкăрсем те, пĕçĕсем те, вĕче шăммисем те пурте ĕмсе ямалла куçа илĕртеççĕ.

**Аня.** Çите!

**Игорь.** Итлĕр-ха эсир!..

**Костя**. Шăп!!! Шăп. Шă-ăп...Чуста Павăлĕн Кĕçтӳкне ку таранччен кăшкăрса калани пулман-ха. Е мана кампа та пулин пăтраштартăр-и?

*Сцена хыçĕнче калаçни илтĕнет.*

**Караççăм сасси.** Тр-р! Стой! Фу, пĕр хал юлмарĕ. Маруç, лашана тăвар, эсĕ пуртăсене, пăчкăсене кĕртсе хур. Ĕçлĕр атя, ĕçслĕр!

**Аня.** Аттесем çитрĕç.

**Костя.** Ну, юрĕ, калаçăва кайран тăсăпăр. Каçчен, Аннушка! Чао, «савни»! *(Каять.)*

**Аня** *(хăй тĕллĕн).* Ăçтан килсе тухрĕ вăл тата ман тĕле?  Игорь, тусăм, каçар мана.

**Игорь.** Мĕншĕн?

**Аня.** Костяшăн та... Ачи çавнашкал ĕнтĕ вăл. Тата... Пĕлетĕн-и, пирĕн атте вăл... Ну, кĕскен, самантлăха çухал-ха. Ав çавăнта, кӳлĕ хĕррине кайса ларма пултаратăн. Манăн малтан аттен кăмăлне тупмалла. Эпĕ кайран хамах сана пырса чĕнетĕп. Ан çилен мана.

**Игорь.** Мĕн эсĕ, Аня, мĕншĕн çиленес манăн сана?

**Аня.** Кай апла. *(Игорь каять.)* Мĕншĕн халех килнĕ-ха вăл? Ултă çула хупнăççĕ-çке ăна.Киревсĕр япала туса хурассăнах туйăнать. Кăна пĕлнĕ пулсан Игоре илсе те килместĕмччĕ, атте-анне пеххилĕсĕрех пурăнаттăмăрччĕ. *(Пӳртне кĕрсе каять.)*

**Караççăм** *(килет).* Çавăнта вĕри чей илсе пырайман. Хăть кăттялук хурса ярасчĕ, Паснаран шыв ăсса чей вĕретнĕ пулăттăмăр. Ялан шаккаса тăмалла. Иккĕнлетсе сĕтĕрĕнсе пынă хăйсем. Сивĕ Шыв лĕрке-лĕрке пĕр вăй юлмарĕ. *(Сакă çинее ларать, аттине, партянкине хывать)*. Елис! Елис, теп!

**Елис** *(килет, пуртăпа пăчкă тытнă).* Мĕн тата?

**Караççăм.** Илсе тух пĕр черкке. Тапăчки те йăтса тух çула май, пĕтĕм ура пăшăхса кайрĕ. *(Елис кĕрсе каять. Караççăм аякка сăнаса.)* Ха, епле кăвакарать леере, çĕр выртмаллипех килдет пулас. *(Сĕтел çинче çыртса хунă панулмине курса.)* Кунта тата кам хуçалане? Вăт, шельмă ачисем, эп килтен пăрăнасса кăна кĕтес тăраççĕ.

**Елис** *(эрех келенчипе черкке тата тапăчки йăтса тухать).* Ак, ме, юлашки. Урăх ыйтсан та çук.

**Караççăм.** Тултар.

**Елис.** Ăна та ху тултарса ĕçеймесĕн-и ĕнтĕ?

**Караççăм**. Ту хушнине! Мĕн, аллу йăтăнса анасран хăратăн-и?

**Елис** *(черкке тултарать).* Ах, саканпа...

**Караççăм** *(ĕçет).* Мĕн, чĕкĕнтĕр ханшисĕр пуçне урăх ханша тупаймарăн-и?

**Елис.** Мĕнпе юхтарас тата? Песук чей ĕçмелĕх кăна юлнă.

**Караççăм.** Еç ху та. Вăт кайрĕ самана. Манăн, Караççăмăн, килте чĕкĕнтĕр ханши ĕçсе лармалла. Сахăрпа та тивĕçтереймеĕĕç те, мĕн шутласа пурăнаç? Çаратаç, çаратаç çĕршыва.

**Маруç** *(килет).* Тăвартăм, лашине леçсе ярам-и?

**Караççăм.** Кайран, кантăр кăштах. Сĕлĕ патăн-и?

**Маруç.** Патăм.

**Караççăм** *(черкке тултарать).* Ак, ĕç ывăннă çинчен.

**Маруç.** Ĕçместĕп эпĕ.

**Караççăм.** Ыран тата тепĕр машина хурăн вутти кайса хатĕрлĕпĕр. Ĕç, ирхине тăма çăмăлрах пулать. Халь тин хĕр мар ĕнтĕ.

**Елис.** Хĕр мар пулсан кам тата, арăм-и? Чĕлхӳ те вара сан, Караççăм.

*Маруç каять.*

**Караççăм.** Ну, йăнăш കаларăм, вара мĕн? Пĕр сăмахран юлмасăр тăратăн. Вăтăрта та хĕр. Тахçаннах арăм пулмалла. Вĕсем вара пурăнаç ашшĕпе аамăшĕ çумĕнче каччăсене тиркесе. Ман сăмаха итлеменнипе çакăн пек пулса тухрĕ.

**Елис.** Кайĕç-ха вăхăт çитсен.

**Караççăм.** Чукмар Иван хĕрĕ те çынна юрăхлă пулчĕ те, пирĕн вара...

**Елис.** Хамăрăн хĕрсем хамăра ытлашши мар ĕнтĕ. тем ан калаç-ха, Караççăм.

**Караççăм.** Эпĕ хамăн ывăлсене авлантарса пĕтертĕм, эсĕ хăвăн хĕрӳсене халĕ те качча параймастăн.

**Елис.** Ман хĕрсем кăна мар вĕсем, санăн та.

**Караççăм.** Вăт-вăт, çавă çав. Кам хĕрĕ? Караççăм хĕрĕтеççĕ. Эпĕ ват пуçпа вĕсемшĕн намăсланатăп, вĕсем вара хăнк та тумаççĕ. Маруçĕ пирки каламастăп та ĕнтĕ: ухмах ухмахах вăл. Анни вара хулара пурăнса та пĕр йĕкĕт тупса ярайман та... Мĕн, Караççăмăн хĕрĕсен питне пăх сĕрнĕ-и?

**Елис.** Кайĕç те, ак, хамăр çеç тăрса юлсан ма кайрĕç-ши тесе калăн. Ывăлусене арăмĕсем çеç кирлĕ, эпир мĕнле пурăннине килсе те пăхмаççĕ.

**Караççăм.** Юрĕ, хăвăн чăх ăсупа такăлтатса ан тăр кунта. Кала ăна, мунчана пĕр хуран шыв çакса ятăр, шывше кӳлĕрен йăттăр. Çемçе шывпа çан-çурăма çемçетес.

**Елис.** Çăмăл тен пуль çыранран шыв йăтса хăпарма, пусăри шыв та юратчĕ пуль ĕнтĕ.

**Караççăм.** Ту хушнине!

**Елис.** Ах, çакăнпа, ывăннă çинчен те пĕрре ларса канма çук. Маруç! Маруç теп! *(Маруç килет.)* Мунчана пĕр хуран шыв çакса яр-ха, аçу çăвăнасшăн. Шывне кӳлĕрен йăт.

**Маруç.** Юрĕ. *(тухса каять.)*

*Пӳртрен Аня тухать. Ун пĕр аллинче коньяк бутылки, тепĕр аллинче тутăр.*

**Аня.** Салам, анне. *(Амăшне чуптăвать.)*

**Елис.** Ак, тамашша, эс вара килте-и?

**Аня.** Сывă-и, атте? *(Ашшĕне пырса ыталать.)*

**Караççăм.** О, Анна, хăçан килтĕн?

**Аня.** Халь çеç çитрĕмĕр. Килне хыççăн чей те вĕретсе çесси пулмарĕ-ха.

**Караççăм.** Ну, каласа пар, хĕрĕм, мĕн туса пурăнатăн хулара? Вĕренсе пĕтертĕне-ха? Кучченеçсемпех иккен эсĕ.

**Аня.** Ку сана вали ятарласа, атте. *(Коньяк бутылкине ашшĕне парать.)* Ку вара сана вали, анне. *(Амăшĕн хулпуççийĕ çинее тутăр çакса ярать.)*

**Елис.** Тавах, хĕрĕм.

**Караççăм.** Эп ăнланаймарăм тем, мĕн ятпаччĕ-ха ку пĕтĕмпех?

**Аня.** Халĕ манна саламлама пултаратăр. Санăн кăмăлна тивĕçтертĕм, атте. Манăн алăра диплом. *(Диплом кăларать.)*

**Елис.** Чăнах-и?

**Караççăм.** Ну, маттур, хĕрĕм! Хăть эсĕ манăн кăмăла татмарăн, хăть эсĕ савăнтаракан пур аçуна. Ну-ка, ну-ка курам-ха. *(Дипломне илет.)*

**Елис.** Кам пултăн ĕнтĕ эсĕ халь, учителех-и?

**Аня.** Учительница, анне, пуçламăш классри ачасене вĕрентекен. Эсир манна учительница тăвасшăнччĕ-çке.

**Караççăм** *(вулать).* Настоящий дилом выдан Кулаковой Анне Герасимовне в том, что она... Вăт! Вăт çавăн пек пулмалла та ăна! Атту Караççăм ачисем вĕренеймеççĕ, теççĕ. Эпĕ вĕсене кăтартăп «вĕренеймеç». Маттур, маттур, хĕрĕм. Кил-а пĕрре чуптусах илем. *(Чуптăвать.)* Ку ятпа халь ĕçсен те юрать. Атя, амăшĕ, илсе тух тата черккесем, çыртмалли те йăтса тух. Диплом çăватпăр.

*Елис пӳртне кĕрсе каять.*

**Аня**. Атте, манăн сана каламалли тата пур.

**Караççăм**. Мĕн тата?

**Аня.** Атте, эпĕ качча каятăп пулас.

**Караççăм.** Мĕн? Качча каятăп? Ма малтанах каламастăн вара? Качча тух, хĕрĕм, качча тух, çемьеллĕ пул. Чаплăран та чаплă туй туса паратăп сана.Атту Караççăм кĕрĕсене тиркеççĕ, теççĕ. Эпир тиркеттерĕпĕр вĕсене! Кам вăл? Пĕрле вĕренекен-и? Учитель-и?

**Аня.** Эпĕ ăна пĕрле илсе килтĕм. Эпи рвеçех калаçса татăлтăмăр ĕнтĕ, туй кĕписене те илнĕ. Сирĕнпе паллаштарма илсе килтĕм. Кунтах вăл. Чĕнсе килем-и?

**Караççăм.** Мĕн кĕтсе тăран вара? Ну-ка, ну-ка курам мĕнлерех пăхаттир ман пулас кĕрӳ.

**Аня.** Эпĕ халех. *(Каять.)*

**Караççăм.** Маттур, маттур, хĕрĕм. Вăт савăнăç, вăт савăнăç. Елис! Елис, теп!

**Елис** *(тухать).* Тухатăп ĕнтĕ, тухатăп, кăшт та кĕтсе тăрасшăн маар. Пĕр канăç çук сана пула.

**Караççăм.** Канăç... Канăç пирки манн ĕнтĕ. Анна качча каятăп тет.

**Елис.** Качча? Кай-ха пуш сăмах çапса ан тăр кунта. *(Каясшăн.)*

**Караççăм**. Ăçта каятăн? Лар ак çакăнта манн çумма. Халех паллаштарать вăл пире унпа, чĕнме кайрĕ.

**Елис.** Вара мĕнле-ха капла тăрукках. Çакăн пек çипуçпа мĕнле курăнас ман çĕнĕ çын умне? *(Тăрать.)*

**Караççăм.** Лар! Сана мар, Аннана çураçаççĕ.

*Елис ларать. Хыçалти планра Аняпа Игорь курăнса каяççĕ. Игорь пăлханнă, кӳлĕ енне çаврăнса пăхать.*

**Аня.** Мĕн пулнă сана, Игорь? Е Костя унта пычĕ-и?

**Игорь.** Çук-çук, нимĕн те пулман.

**Аня.** Çĕкле кăмăлна. Эсĕ аттене килĕшсен эпир пĕрлешнĕ тесе шутлама пултаран. *(Караççăмпа Елис умнее пырса.)* Акă, Игорь, палаш. Ку- манăн атте, ку – манăн анне. Ку вара Игорь, манăн пуласси.

**Караççăм.** Здравствуй, ывăлăм. Кĕрӳ темелле пуль ĕнтĕ.

**Игорь.** Здрасте! Çаплах пултăрччĕ.

**Караççăм.** Герасим Сидорч теççĕ мана. Ял хушшинче – Караççăм. Ку ак амăшĕ, Елис.

**Игорь.** Эпĕ Игорь ятлă.

**Аня** *(вылянкаласа).* Вйт паллашрăр та. Халĕ пеххиллеме те вăхăт.

**Караççăм**. Ну, ытла та хăвăрт хытланатăн эсĕ, хĕрĕм. Япалан ун йĕрки пур.

**Аня.** Телейлĕ эпĕ, атте, нихăçанхинчен те телейлĕ. Юрататăп эпĕ Игоре.

*Фата туртса кăларса унпа ташласа çаврăнать. Хыçалти планра Маруç шыв витрисемпе иртсе сӳрет, çна Игорь куçпа ăсатать.*

**Караççăм**. Ача чухнех ташлама юрататчĕ, лайăх хĕр вăл манăн.

**Игорь.** Çапла, килĕшет вăл мана.

**Караççăм**. Ну, каласа пар, ăçтисем пулатăн-ха эсĕ, ачам? Мĕн ĕçлесе пурăнан?

**Игорь.** Эпĕ Шупашкарта çуралса ӳснĕ. Халĕ ак прапорщиксен шкулне пĕтертĕм те, тепĕр эрнерен чаçре пулмалла. Унччен авланас терĕм.

**Карaççăм**. Пĕр-пĕрне чылайранпа пĕлетĕр-и?

**Аня.** Пĕр эрне çеç, атте. Эпир пĕрне-пĕри пĕрре курсах юратса пăрахрăмăр. Пĕрре курсах - ĕмĕрлĕхе. Çапла-и, Игорь?

**Карaççăм.** Апла иккен-ха.

**Елис.** Аçу-аннӳ пур пуль?

**Игорь.** Атте çук манăн, эпĕ ачач чухнех вилнĕ Вăл. Анне Шупашкарата таксопаркра диспетчерта ĕçлет.

**Елис.** Вара эпĕ тата çакна ыйтса пĕлесшĕнччĕ-ха...

**Карaççăм** *(çиллес).* Елис! *(Кăмăллăн.)* Эппин авланас тетĕн-ха?

**Игорь**. Авланмалла пуль, вăхăт çитнĕ ĕнтĕ.

**Карaççăм**. Чаçĕ вара аякра вырнаçнă-и сирĕн?

**Игорь.** Çывăхра маар, кавказра.

**Елис.** Тур çырлах, вара унта вăрçă пырать темеççĕ-и?

**Игорь.** Çук, халь вăрçă пымасть.

**Карaççăм.** Вăл çапла пуль те-ха. Эпĕ ак çакна ыйтасшăн-ха. Служит тăвас тесех эсĕ хăвăн ĕмĕрне çарпа çыхăнтарасшăн-и?

**Игорь.** Килĕшет мана çар служби, чăн çапла.

**Карaççăм.** Юрĕ тейĕпĕр. Манăн Анна ĕнтĕ институт пĕтерчĕ, учителе çитрĕ. Çар çыннисене пĕрмай пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçараççĕ те, сан хыççăн сĕтĕрĕнсе çӳресе вĕренни сая каймĕ-ши тетĕп.

**Елис.** Карaççăм...

**Карaççăм.** Мĕн тата?

**Аня.** Ĕç пулмасан килте ларатăп. Теçеткипех ачасем çуратса тултаратăп. Кичем пулмасть, атте.

**Елис.** Вара ачасем аякран килнĕ, канасшăн пуль, хырăмĕсем те выçнă пуль.

**Карaççăм**. Эпĕ мĕн чаратăп-и? Çитер.

**Елис.** Анна, атя кĕрĕве пӳрте илсе кĕр. Чей ĕçтер, çитер, хăна ту.

**Игорь**. Ан чăрманăн, эпĕ пачах та выçманн.

**Елис.** Кĕр атя, кĕр, çул выçтарать вăл.

**Аня.** Атя, Игорь, эпĕ сана çăка чечекĕнчен чей вĕретсе ĕçтереп.

*Аняпа Игорь кĕрсе каяççĕ.*

**Карaççăм**. Мĕн сĕкĕнетĕн эсĕ пур çĕре те? Миçе хутчен каламалла сана кутна хĕс те çын калаçнине итлесе лар тесе. Çук вĕт, пĕр сăмахран юлмалла маар унăн.

**Елис.** Çынпа çын пек калаçма вĕренеймерĕн ĕнтĕ эсĕ, Караççăм. Ют çынна тӳрех мĕнле çавăн пек калăн-ха? Çын кăмăлне пăсас тесен сана кăна хуш.

**Караççăм**. Килнĕ кунта сĕтĕрĕнсе. Авланасшăн тата! Кам вăл манăн, Караççăмăн хĕрне качча илме? Тупăннă прапорщик. Елис. Ачи лайăхах пуль-ха. Усал шухăшпа килмен-çке.

**Караççăм.** Çар çынни те пуласси пулмасть унран. Тĕнче касса çӳрĕç ак икекĕнлетсе. Кам вăл прапорщик? Ăна ни салтак, ни офицер хисеплемест. Офицер пулнă пулсан сăмах та каламан пулăттăм. Аннана илсе каять те ак. çулталăкĕ-çулталăкĕпе пурăнаççĕ Килмесĕр. Эпĕ хама хуçалăхра пулăшакан кĕрӳ пулĕ-ха тесе ĕмĕтленнĕччĕ.

**Елис**. Хĕр тени ашшĕ килĕнче лармасть ĕнтĕ, кайччĕр.

**Караççăм**. Çитĕ сана такăлтаса.

**Елис.** Эй, тупата туршăн! Хĕр качча каять, савăнмалла пек ĕнтĕ, эпир вара... Сан кăмăлна никам та тупса пĕтерес çук.

**Караççăм.** Ан чĕн!

**Хветуç сасси.** Кша! Кша! Кайăр киле, кайăр, манн хыçран ан çӳрĕр, ӳсĕр эпĕ паян! Петенька, пыр илсе кай чăххусене килелле. Кша!

**Елис.** Ку кăна çитменччĕ. Пирĕн пата куне аллă каçмасан чунĕ канмасть пуль çавăн.

**Хветуç** *(килет).* Эх, караççăм, кăрăç кăмпи! Ну, юхтартăм тăк юхтартăм. Ну, пулчĕ Тăк пулчĕ. *(Сакă çинее ларать.)* Ларам-ха ак çакăнта санпа юнашар. Сна савса ятарласа хăна тума каçрăм. Атя, ярар-ха иксĕмĕр пĕрер черкке. *(Хĕвĕнчен пĕр бутылка ханша кăларать.)* Елис, эс унта шăл хăйраса ан çӳре. Санăнне ĕçместпĕр, неччу!

**Елис.** Кирлех пуль эсĕ манна.

**Хветуç.** Кил ĕнтĕ, кил çывăхарах, сана та ярса паратăп. Кăштах киккирикӳ хĕрелсе кайтăр.

**Елис.** Тьфу! Пĕрре те намăсу çук вара сан.

**Хветуç.** Мĕн каларăм вара эпĕ? Эпĕ нимĕн те каламарăм.

**Караççăм.** Мĕн ятпа ĕçтеретĕн-ха тата паян?

**Хветуç.** Ахалех, ахалех, караççăм. *(Черкке тултарса парать.)* Янклаттарар-ха иксĕмĕр пĕрре арçынла. Эмĕ Мĕн арçын ĕçне ĕçлемен-и, лаша вырăнне кӳлĕнмен-и? Мĕншĕн манăн арçынран кая ĕçмеле тет, а? Сан вăл арăму ĕçеймест те, ĕçлеймест те.

**Елис.** Эсех килсе ĕçлесе паратăн пуль ĕнтĕ.

**Хветуç.** Эс ман пек пĕччен маар. Сан килте тарçă пур, упăшку та юнашар.

**Караççăм** *(сĕтелне чăмăрпа çапса).* Цыц! Тепре кун пирки сăмах хускатсан ханшуна шеллемесĕрех пуçна çапса çуратăп.

**Хветуç.** Вара мĕн каларăм вара эпĕ, нимĕн те каламарăм-çке. Маруç кăна маар, Елис та ĕçлет те-ха. Эй, турă, ӳсĕр çын сăмахне чĕре патне ма илеççĕ-ши пĕреххут. Шӳтлеме те юрамасть вара сирĕнпе.

**Караççăм.** Шӳтлеме пĕлмелле ăна. Юрĕ, тултар атя.

Хветуç *(черккесем тултарать).* Паçăрах çавăн пек калаççĕ те ăна. Атту ларатпăр вăрçăнса. Тыт атя.

**Караççăм**. Кала, мĕн кирлĕ пулчĕ-ха тата?

**Хветуç.** Нимĕн те. Нимĕн те, эпĕ савса çеç. Чалăш ан пăх ĕнтĕ, Елис. Хĕрпе каччă пек савса маар, Караççăмăн кăмăлне савса.

**Елис.** Кам пăхнă сан çине?

**Караççăм**. Ахалех ĕçтерместĕн те-ха.

**Хветуç.** Ахаль юрамасть-и вара? Эх, караççăм, ылтăнăм, улма кăларма вăхăт çитсе пырать те, сухапуçĕ чиперех тăрать-ши терĕм.

**Караççăм.** Çĕмрĕк пулсан юсаса парасшăн маар пуль те? Атту вĕт эсĕ арçын ĕçне те пит маçтăр тен.

**Хветуç.** Кĕреçепе чавса кăларма хал çитмест вĕт, караççăм. Эсĕ ĕнтĕ манна пĕр пахча улмапа пĕччене пăрахса ан хăвар. *(Караççăм енне туллии черкке чышать).*

**Караççăм.** Юрĕ, çукшăн калаçса ан тăр. *(Ĕçет.)* Ĕçтермен пулсан та сухаласа параттăм.

Хветуç. Вăт, тавах, Караççăм. Вилсен çӳлти патшалăха лекмелле пултăр санăн.

**Караççăм**. Ну-ну, эсĕ халех пылпа икерчĕ çиес тесе ан ĕмĕтлен-ха. Иртерех-ха манна вилме. *(Ирина килет, вăл салху.)* Кин! Атя, кил, ирт, ирт! Сĕтел хушшине лар. Ылтăн кин вĕт вăл манăн. Вăл килсен пӳрт те çуталса каять.

**Ирина.** Тавтапуç, эпĕ самантлăха çеç килтĕм, выльăхсене те пăхман-ха. Миша кунта килмен-ши терĕм те.

**Караççăм.** Çук, килмен кунта.

**Елис.** Ĕçĕнчен таврăнаймарĕ пуль-ха.

**Ирина.** Ĕçне те пыман тет вăл паян.

**Елис**. Чим-ха, ан васка-ха, ача вали панулми илсе кай. *(Панулмисем илсе парать, шăппăнĕ.)* Вăрçăнмарăр пуль те?

**Ирина.** Хăçан вăрçăнмасăр пурăннă эпир? Çĕркĕ те çурçĕр çитеспе çеç таврăнчĕ, хĕрĕнкĕччĕ. Ăçта çӳренĕ, кампа çӳренĕ çав таранччен, каламасть. Каям-ха эпĕ.

**Елис.** Кин, варарахпа килĕр Мишапа пĕрле. Анна йĕкĕт çавăтса килнĕ. Çывăххисем пухçнса калаçса ларăпăп.

**Ирина.** Юрĕ.

**Хветуç.** Кин, ан васка ĕнтĕ, сĕтел хушшине лар, çăкăртан аслă ан пул.

**Ирина.** Тавтапуç. Тепĕр чух. *(Каять.)*

**Хветуç.** Апла, Елис. Эсĕ ĕçсе пар. *(Елиса черрке тултарса парать.)*

**Елис.** Юрĕ, эппин, тытса парам. *(Тумлатать.)* Ваттисен умĕнче пултăр. *(Ĕçет.)*

**Хветуç.** Эх, юрласа ярар-ха атя пĕрре. Елис, пулăш атя юрă çаварма.

*(Елиспа Хветус юрă юрлаççĕ.)*

**Елис**. Вара ма хамăр кăна ларатпăр-ха? Кĕрӳсене те чĕнмеллеччĕ. *(Пӳртне кĕрсе каять.)*

**Хветуç.** Кĕрӳ тетре? Хăш вăхăтра кĕрӳллĕ пулма ĕлкĕртĕн-ха эс, Караççăм?

**Караççăм.** Хальхи çамрăксемпе вĕт сисе те юлаймастăн. Хыçалалла çаврăнса пăхнă çĕре кĕрӳллĕ кăна маар, мăнукоă та пулса тăрăн-ха.

**Хветуç.** Хăшне качча патăн-ха тата? Мана ма систермерĕн? Эп сана кунта ĕçтеретĕп, ĕçтеретĕп, матькасси, вăл манна хĕр пама та чĕнмен.

**Караççăм.** Паман-ха, пĕрне те паман. Анна хуларан пĕрне çавăтса килнĕ. Яр-ха атя тепĕр черкке. Йĕкĕт кăна мар, диплом та илсе килнĕ вăл.

*Елис, Аня тата Игорь тухаççĕ.*

**Аня.** Чипер çӳретĕн-и, Хветуç аппа?

**Игорь.** Сывлăх сунатăп сире.

**Караççăм.** Акă вăл манăн кĕрӳ пуласси.

**Хветуç.** Качча каятăп тетĕн-ха апла, Анна. Чаплă йĕкĕт тупса янă вара эс. Кун пек арçын аăне кĕрсе выртма та кăмăллă.

**Аня.** Тем ан калаç-ха, Хветуç аппа.

**Хветуç.** Чĕре айĕнче тяпписемпе тăп-тăп тапаканни çук-и-ха унта.

**Караççăм.** Хветуç, ытлашшине калаçса ан кай.

**Хветуç.** Мĕн каларăм вара эп? Эп нимĕн те каламарăм. Хальхи çамрăксен пирвайхисем ик-виç уйăхрах ĕлкĕреççĕ те. Ели сăна, ухмах, тăхăр уйăх йăтса çӳресе нушаланнă. Ну, юрĕ, мана ӳсĕре, ан çиленĕр. Телейĕрсем пулччĕр. Кил-ха, ĕçсе пар-ха çак хаяр шĕвеке.

**Аня.** Ĕçместĕп эпĕ.

**Хветуç.** А, ăнлантăм, юрамасть пуль-ха. Эппин, кĕрӳ, эсĕ тыт.

**Игорь.** Тавтапуç, эпĕ те ĕçместĕп-ха. Ĕлкĕретпĕр-ха ĕçме.

**Хветуç.** Ак тамашша! Хальхи çамрăксем пăру пекех ĕçекенччĕ те, кусем вара... Тиркеместĕр пулĕ те?

**Игорь.** Çук, çук.

**Хветуç.** Апла, Елис,  эсĕ тыт.

*Елис паçăрхи юррине малалла тăсать, унпа пĕрле Хветуç та юрлать. Марус килет, вĕсем Игорьпе иккĕш пĕр-пĕрин çинее пăхса илеççĕ.*

**Маруç.** Шыв вĕриленчĕ, кайса çăвăн.

**Караççăм.** Юрĕ.

**Елис.** Маруç, выртиччен тата ĕне су-ха.

*Маруç каять.*

**Игорь.** Кам ку?

**Караççăм.** Манăн пĕр ухмах хĕр пур, Маруç ятлă.

**Елис.** Ухмах маар вăл. Ма ун пек калатăн?

**Караççăм.** Ăслă маар ĕнтĕ.

**Хветуç** *(Елиса вăрттăн).* Кала атя, кала, кала...

**Елис** *(черккине ĕçсе ярать).* Ых! Ĕмĕр чуна илсе пурăнатăн ĕнтĕ. Ачасене те темтепĕр каласа хăртатăн, пурне те хамăртан пистеретĕн. Эс кăна лайăх!

**Караççăм.** Елис!..

**Елис.** Çавăнпа тухса кайсан пĕри те килсе пăхмаççĕ те хамăра. Хам пулсан та килместĕп. Эс хăртнине килсе итлемелле-и вĕсен?

**Караççăм.** Елис, чар чĕлхÿне! Е черккÿ туллирех пулчĕ-и?

**Аня.** Çитĕ сире тавлашса, иксĕр кăна чухне тавлашăр. *(Игоре.)* Манăн аппа вăл.

**Караççăм.** Юрĕ, кайса çăвăнам, тушка кантăр. Елис, таса кĕпе-йĕме мунчана пырса пар. *(Каять.)*

**Елис.** Ых! Туласа кăна тăкăттăмччĕ Те вĕт... Ĕмĕр иртрĕ ĕнтĕ ун хаярлăхне тÿссе.

**Аня.** Анне, атя пÿрте кĕрĕр-ха, Игорь умĕнче аван мар. Хветуç аппа, эсĕ те кĕр кучченеç çиме.

**Хветуç.** Юрĕ, эппин, сирĕн кăмăлăра татам мар. Мăнкăмăллă çын маар эпĕ, чĕннĕ çĕре кĕретĕп.

*Хветуçпа Елис пÿртне кĕрсе каяççĕ.*

**Аня.** Игорь, каçар эс вĕсене.

**Игорь.** Нимех те мар, кун пеккисене эп куркаланă. *(Пауза.)*

**Аня.** Мĕн çинчен шутлатăн?

**Игорь.** Нимĕн çинчен те.

**Аня.** Эс улшăнтăн. Кăмăлна пăсрĕç-и?

**Игорь.** Çук, мĕн эсĕ, Аня.

**Аня.** Ан çилен эсĕ аттене, лайăх çынах вăл. Пĕр çитменлĕхĕ пур – усал. Яланах хăйле тунине юратать. Пирĕн çемьере вăл каланинчен халиччен никам та иртмен.

**Игорь.** Аня... Санăн аппу... Качча кайнă-и вăл?

**Аня.** Çук, кам илтĕр ăна, ухмаха.

**Игорь.** Мана вăл ухмах пек туйăнмарĕ.

**Аня.** Игорь, эпĕ паллаймастăп сана. Эсĕ çав ухмаха юратса пăрахмарăн пулĕ те?

**Игорь.** Мĕншĕн ухмах вара?

**Аня.** Ăслă пулсан çавăн пек çӳремест ĕнтĕ. Ун çине пăхсан хăсас килет. Эпĕ апат çиме те унпа юнашар лармастăп. Çите, ун çинчен калаçса кăмăла пăсар маар. *(Çепĕççĕн.)* Пăх-ха манна куçран, Игорь. Ну? Манăн кун пек салхуллă курас килмест сана. Кул-ха ĕнтĕ кăшт та пулин, çĕкле кăмăла. Капла эсĕ авланасшăн мар пекех.

**Игорь.** Çук-çук, мĕн эсĕ, Аня.

**Аня.** Ху манна качча илесшĕн, ху манăн кăмăла та çĕклесшĕн мар.

**Игорь.** Каçар манна, эпĕ юрату академийĕ пĕтермен çав. Ку таранччен пĕр хĕрпе те савса çӳремен. Эсĕ пирвайхи.

**Аня.** Чăнах-и?

**Игорь.** Чăнах.

**Аня.** Игорь, юратăвăм эсĕ манăн. Мĕнле хитрее вĕт-ха эсĕ: кĕлеткӳ те, çӳçӳ те, туту та. Сан çинее пăхса тăранмалла маар. *(Игоре ачашлать.)* Игорь, ясар хĕр тесе аш шутла манн пирки çакăн пек пулнăшăн. Сана ытлашшипех юратнипе çеç эпĕ. Манăн часрах санăн арăму пулас килет. Ĕмĕр тăршшĕпех сан ытамунта пулас ктлет.

**Игорь** *(Аняна ыталаса).* Çакăн пек çыхланса пурăнас килет-и сан?

*Хыçалта Костя курăнса каять, Игорьпе Аняна сăнать.*

**Аня.** Игорь, ачашла-ха манна.

**Игорь.** Ак çакăн пек-и?

**Костя.** Эсĕ мĕн нихăçан та хĕр ачашласа курман-и? Хĕре кам çавăн пек ачашлать?

**Игорь.** Курнă-и, курман-и – сан ĕç çук кунта!

**Костя.** Вĕрентес теменччĕ, хамăнах вĕрентме тивет пулмалла сана хĕр ачашлама. *(Аня енне пырать.)*

**Аня** *(хыçалалла чакса).* Костя, ан ухмахлан.

**Костя** *(Аняна ярса тытать).* Ак çакăн пек ачашлаççĕ ăна.

*Игорь Костяна хыçалтан ярса тытать, сирсе ярасшăн. Леш ăна пĕтĕм вăйран çапса ярать. Игорь ӳкет, кĕпи çурăлса каять. Маруç килет, аллинчи алшăллипе клстяна хĕнет.*

**Маруç.** Мĕн кирлĕ сана кунта? Кам чĕннĕ сана? Çӳретĕн пурне те сăнаса. Тасал кунтан! Капла та миçе хĕре мăшкăл турăн, хăçан кăна пĕтĕн-ши?

**Костя** *(Маруçа).* Санăн та чĕлхӳ пур-и? Эпĕ сана нимуй тесе. Тен сана та ачашласа илмелле? Атту вĕт сана пăрусемсĕр пуçне никам та чуптуса курман.

*Костя Маруçа тапăнса пырать, Игорь Костяна çапса ярать, Костя ăнахирĕç çапать. Игорь каллех ӳкет.*

**Аня.** Костя, кай тархасшăн, шăв-шав ан ту. Итле каланине.

**Костя** *(Игорь енне кăтартса).* Манăн малтан ак çакăнпа тĕплĕнрех паллашас килет.

**Аня** *(Костя çулне пӳлсе).* Костя, чарăн!

**Костя** *(Аняна чышса ярать).* Пăрăн кунтан!

**Аня.** Костя!

**Маруç.** Ан тĕкĕн ăна, костя. Мĕнпе айăпа кĕнĕ вăл сан умăнта?

**Костя.** О, мĕнле кавалер! Пурте ăна хӳтĕлеççĕ. Йăнăш çул суйласа илнĕ вăл хăйне валли. Аняна маар, ав хăвна хӳтĕлекене, Маруçа ачашла. Тен пăру çуланă хыççăн унăн тутти те пылакрах калать пуль.

**Маруç** *(сейник ярса илет).* Тискер кайăк эсĕ! Халех витĕр шăтаратăп.

**Костя.** Эсĕ мĕн?! Пăрах сейникне!

**Маруç.** Кай кунтан!

**Костя.** Каятăп, каятăп, пăрах сейникне.

**Маруç.** Кай!

**Костя.** Юрĕ, сирĕнле пултăр, каятăп. Анчах та малтан манăн унпа (Аня енне тĕллесе.) сăмах пур.

**Аня.** Кала та атя мĕн каламаллине, кай кунтан.

**Костя.** Ытлашши ан васка. Васкакан вакка сикнĕ тет. Кил кунтарах.

*Аняпа Костя аякка кайса тăраççĕ, Маруç сейникне таянтарса Игорь патне пырать.*

**Аня.** Мĕн кирлĕ сана?

**Костя.** Эсĕ кирлĕ. *(Аняна ярса тытать.)*

**Аня** *(вĕсерĕнсе).* нихăçан та!

**Костя.** Пĕлетĕн-и эпĕ тĕрмере хĕрсемшĕн мĕнле антăхнине? Пилĕк çул хушши эпĕ çак куна кĕтсе пурăнтăм, пилĕк çул хушши эсĕ манн асран тухмарăн, пилĕк çул хушши эпĕ сана ачашласса ĕмĕтленсе пурăнтăм.

**Аня**. Ахалех ĕмĕтленнĕ. Эпĕ нихăçан та санăн пулас çук.

**Костя.** Тĕрмене лариччен эсĕ манăн пулнă, халĕ те манăнах пулатăн. Никама та памастăп эпĕ сана.

**Аня.** Манăн урăххи пур. Кай вон хăвăн карчăкусем патне, вĕсем сана лайăхрах ачашлаççĕ Пулас.

**Костя.** Тĕрмене лариччен эпĕ сана кирлĕччĕ, халĕ кирлĕ маар эппин? Итле-ха эс, чиперкке, мĕншĕн эпĕ сан шутпа тĕрмене лекрĕм? Сана пула мар-и?

**Аня.** Эпĕ сана пĕччен хĕрарăмсене мăшкăллама хĕтĕртмен.

**Костя.** Кам мана çав çул çинее тăратрĕ? Ка манна çăкалăха илĕртсе кятчĕ? Ик пĕç хушши мăклана пуçличченех кам арçынна тутанса курас терĕ, эсĕ мар-и?

**Аня.** Чарăн...

*Çак вăхăтра çутă Маруçпа Игорь çине куçать.*

**Игорь.** Маша...

**Маруç.** Куçран лектерчĕ-и? Кăвакарса кайма пултарать вĕт, кĕсьере те тимĕр укçа çук.

**Игорь.** Нимĕн те кирлĕ маар. Эсĕ çеç юнашар пул.

**Маруç.** Халех тутăра сивĕ шывпа йĕпетсе килетĕп. *(Пуçĕнчи тутăрне салтса каять те часах таврăнать.)* Тыт ыратакан çĕре.

**Игорь.** Тавтапуç, Маша. *(Маруç аллинчен тытать.)*

**Маруç.** Яр. *(Тăрать.)*

**Игорь.** Маша... *(Ун хыççăн тăма тытăнать, анчах аяк пĕрчине ярса тытса кăшкăрса ярать.)* Ах!

**Маруç.** Ыратать-и, ăçта?

**Игорь.** Аяк пĕрчи.

**Маруç.** Тискер кайăк вăл. Хытах ыратать-и?

**Игорь.** Нимех те маар. Эсĕ çакăнтан тытсан иртсе каять. *(Маруç аллине хăйĕн аяк пĕрчи патне илсе пырать.)*

**Маруç.** Каçар, эп пултараймастăп. *(Аллине илет.)*

**Игорь.** Ах!

**Маруç.** Игорь!

**Игорь.** Маша...

*Çутă каллех Костяпа Аня çине куçать.*

**Аня.** Чарăн!

**Костя.** Çук, итлесе пĕтер манна, Эпĕ ӳсĕре пула ухмахланса тĕрмене текрĕм. Эсĕ çав вăхăтра ытти арçынсемпе ачашланса пурăннă. Е эсĕ Костя нимĕн те пĕлмест тетĕн-и? Костя пĕтĕмпех пĕлет. Тен сав сан нимĕн те пĕлмест пулĕ, анчах та манран эсĕ нимĕн те пытараймастăн. Çак пилĕк çул хушшинче эсĕ ăçта кайнă, мĕн тунă, кампа пурăннă – пĕтĕмпех пĕлетĕп эпĕ. Ал лаппи çинчи пек курса тăнă эпĕ сана, «педагог». Паллах кунта никам та пĕлмест эсĕ суя диплом тутарнине те, пĕр курс пĕтеричченех институтна пăрахса варьеттере ташласа пурăннине те...

**Аня.** Кам каларĕ сана кун пирки?

**Костя.** Аргоня килсе кайрĕ ĕнер манн пата. Вăл сана суя диплом туса панă вĕт.

**Аня.** Ирсĕр! Вăл манна шантарчĕ-çке никама та каламастăп тесе. Мĕн чухлĕ укçа патăм эпĕ ăна çавăншăн.

**Костя.** Ха-ха-ха!.. Эсĕ мĕн, манăн юлташсем сахал тетĕн-и? Вĕсем эпĕ ыйтитне пĕтĕмпех тивĕçтерсе пычĕç.

**Аня**. Йăлăнатăп сана, костя, ан кала кун пирки никама та. Эпĕ сана укçа паратăп. Шелле мана.

**Костя.** Нимĕнле укçа та кирлĕ маар манна, манна эсĕ кирлĕ.

**Аня**. Çук, эпĕ пултараймастăп. Мана юрамасть.

**Костя.** Ыттисемпе юрать иккен, манпа юрамасть.

**Аня.** Çук.

**Костя.** Тен сана хăвна укçça памалла? Эсĕ вĕт леере укçалла арçынсене ачашласа пурăннă. Пĕр каçшеен мĕн чухлĕ памалла сана? Кун чухлĕ-и? *(Пĕр аллин пӳрнисене сараса. Кайран икĕ аллин пӳрнисене сарать.)* Кун чухлĕ-и?

**Аня.** Нимĕн те кирлĕ маар мана санран. Хăвар манна, тархасшăн.

**Костя.** Эпĕ сана çур сехет паратăп. Е хамăрăн ĕлĕкхи вырăна пыратăн, е паянах эпĕ сана тăрă шыв çинее кăларатăп.

**Аня.** Çук, манна юрамасть, эпĕ качча каятăп, манăн савни пур.

**Костя.** Эпĕ хамăн сăмаха тытатăп, эсĕ манна пĕлен.

**Аня.** Костя, ăнлан-ха, тархасшăн...

**Костя** *(сехетчĕ çинее пăхса).* Çур сехет санăн, вăхăт кайрĕ.

**Аня.** Костя, тăхта...

**Костя.** Чипер, «савни»! Чипер, Маруся!

**Аня**. Костя!

*Костя каять. Аня пĕр хушă ним тума пĕлмесĕр тăрать. Кайран Игорьпе Маруç патне пырать.*

**Маруç.** Ирсĕр.

**Аня** *(Игоре).* Хытах лектерчĕ-и?

Игорь. Нимех те мар.

**Маруç** *(Аняна).* Мĕн терĕ вăл сана?

**Аня.** Ой, кĕпӳне çурса янă. Каçар манна, Игорь. Вăл хăй мĕн хытланнине хăй те пĕлмест.

**Игорь.** Çынни çавнашкал пулас вăл, пур çĕре те сăмсине чикет.

**Маруç.** Хывса пар кĕпӳне, çĕлесе паратăп.

**Аня.** Эсĕ те пулин ан сĕкĕн-ха пирĕн хушша! Сансăрах çĕлеççĕ.

*Маруç каять.*

**Игорь.** Аня, ан вăрç Машана, сан аппу-çке вăл.

**Аня.** пĕрре те эпĕ ĕмĕтленнĕ пек пулса пымасть, веçех кутăнла. Мĕн тума илсе килтĕм-ши сана кунта. Атте-анне пеххилĕсĕрех пĕрлешмеллеччĕ те пурăнмаллаччĕ. Мана вĕсем пурпĕрех нихăçан та ăнланас çук. Хыв кĕпӳне, çĕлесе паратĕп. *(Игорь кĕпине хывать.)* Игорь, тусăм, эпĕ сана çухатасран хăратăп.

**Игорь.** Ан хăра. Ăçта кайса çухалатăп-ха эпĕ?

**Аня.** атя манпа пӳрте.

**Игорь.** Çук, унта аçупа аннӳ, çурăк кĕпене курсан тата тем шутлĕç.

**Аня.** Эппин мунчана кайса çăвăн.

**Игорь.** Çук, эпĕ кунтах пулатăп.

**Аня.** Юрĕ эппин, эпĕ часах.

*Аня пӳртне кĕрсе каять. Хветуç тухать те крыльца айккине тула ларма тăрать, анчах та Игоре асăрхаса чарăнать.*

**Хветуç.** Кĕрӳ! Кĕрӳ, кил-ха кунтарах.

**Игорь.** Мĕн, аппа?

**Хветуç.** Эсĕ чăнласах авланас тетĕн-и вара?

**Игорь.** Авланас стемен пулсан кунта килес çукчĕ ĕнтĕ.

**Хветуç.** Пĕрре те Аннана илтерес килмест манăн сана. Маруçа пулсан савăнса кăна тăрăттăм. Анна вĕт вăл...

**Игорь.** Мĕн вара вăл?

**Хветуç.** Ман калама та юрамасть те-ха. Эй, мĕн пулать те, мĕн килет. Ӳкĕнмелле пулать вĕт сан. Ясар хĕр вăл. Ачаллах Кĕçтӳкпа мĕн кăна хытланмарĕ. Шкултан та кăларса ярасшăнччĕ Ăна. Караççăм кăна учительсем патне кайса майлаштарчĕ.

**Игорь.** Туй умĕн юри киревсĕр сăмах сарма кирлĕ маар пуль.

**Хветуç.** Ĕненмест-ха вăл тата. Ак хĕрес. *(Сăхăсхса илет.)* Мана ĕненмесен Маруçран ыйт. Аннана пĕрре те кăмăлламастăп çав. Вĕçкĕн вăл, усал, ашшĕне хунă. Телейли Маруç пулмалла та вĕт... тури пачах та кутăнла туса пырать. *(Аякка пăхса.)* Ав, ĕçлет ĕнтĕ мĕскĕн. Пĕтĕм ĕçĕсене ун çинее тиеççĕ. Эсĕ хăть калаç-ха унпа, калаçса чуне лăплантар. Хуйхи пысăк вĕт унăн, хуйхи пысăк; Эпĕ кĕрем-ха, аннине пӳртре ытларах калаçтарса тытса тăрам.

*Хветуç кĕрсе каять, Маруç витре йăтса иртсе каять.*

**Игорь**. Маша! Маша, ан кай. Лар-ха манпа юнашар.

**Маруç.** Çук, аня курма пултарать.

**Игорь.** Манăн санран ыйтмалли пур.

**Маруç.** Ыйт, эпĕ итлетĕп.

**Игорь** *(Маша хулĕнчен тытса юнашар лартать).* Маша, эпĕ ăнланаймастăп, мĕн пулса иртет кунта?

**Маруç.** Эсĕ Костя пирки-и?

**Игорь.** Ун пирки те, аня пирки те, сан пирки те. Маша, мĕн тери хитрее вĕт-ха эсĕ.

**Маруç** *(пуçне пăрса).* Эсĕ те манран кулатăн.

**Игорь.** Эсĕ чăн та питĕ хитрее. Мана ялан сан пеккисем килĕшетчĕç. Сăпайлисем, ырă кăмăллисем, çынлăха çухатманнисем...

**Маруç.** Ăçтан пĕлетĕн эсĕ манна, те нэпĕ питĕ усал çын.

**Игорь**. Сан куçусеем ырă.

**Маруç.** Аня вара... Эсĕ унпа килнĕ-çке. Вăл сана килĕшме пăрахрĕ те-и?

**Игорь.** Аня вăл урăх çын. Вăл камне пĕлес тесен нумай тăвар çимелле. Эсĕ вара тĕкĕр умĕнчи пекех витĕр курăнатăн. Кала-ха, кам эсĕ ку килте: вĕсен тăван хĕрĕ е ют çын? Мĕншĕн сана пĕрре те хисеплемеççĕ вĕсем? Мĕншĕн ухмах вырăнне хураççĕ?

**Маруç.** Ан ыйт нимĕн те. Тан, ак тăванлашсан, пĕлĕн хăвах.

**Игорь.** çук, манăн халех пĕлес килет.

**Маруç.** Килмелле марччĕ санăн кунта, йăнăш лекнĕ эсĕ ку çурта. Ӳкĕнмелле пулса тухасран хăратăп эпĕ.

**Игорь.** Маншăн та хăракан пур-и? Çук, Маша, тĕрĕс лекнĕ эпĕ ку çурта. Эпĕ кунта сана тĕл пултăм.

**Маруç.** Мĕн калаçатăн эсĕ?

**Игорь.** Сана кӳлĕ хĕрринче курсанах чĕре сиксе илчĕ. Сан патна пырасшăнччĕ, эсĕ тартăн. Вĕçкĕн тесе ан кала манна, хăйĕн шухăшĕсене те самантрах улăштарать тесе те ан кала. Чĕре сан еннех туртăнать. Чăн çапла, Маша.

**Маруç.** Çук, ан кала нимĕн те.

**Игорь.** Манăн сан енне питĕ пысăк туйăм пур.

**Маруç.** Манăн çамрăклăх тахçаннах вĕçленнĕ. Пысăк туйăмсене тивĕçлĕ çын маар эпĕ.

**Игорь**. Ку тĕрĕс мар. Эпĕ яланах сан пеккисемпе тĕл пуласчĕ тесе ĕмĕтленеттĕм, Маша. *(Ыталать.)*

**Маша** *(вĕçерĕнсе).* Яр, Аня курма пултарать.

**Игорь.** Куртăр, килĕшетĕн эсĕ манна.

**Маруç.** Çук!

**Игорь**. Чăн çапла, Маша. Кала-ха, пĕр чĕптĕм те пулин килĕшетĕп-и эпĕ сана?

**Аня** *(тухать).* Акă пулчĕ те. Мĕн пулнă сире? *(Маруçа.)* Мĕн туса тăратăн эсĕ кунта?! *(Маруç пăрăнать.)*

**Игорь.** Маша, тăхта. Итле-ха, Аня...

**Аня.** Çук, ĕненместĕп. Мĕнле-ха капла, Игорь? эсех-и ку? *(Маруçа.)* эсĕ тата нумай тăрасшăн-и кунта?!

**Игорь**. Маша, ан кай!

**Аня.** эсĕ манна унпа, çав катемпипе... Кураймастăп сана!

**Игорь.** Аня...

**Аня.** Кала-ха кам сана кунта илсе килчĕ? Кама çураçма килтĕн эсĕ?

**Игорь.** Аня...

**Аня.** Кураймастăп сана! (Кĕпине Игорь енне ывăтса.) Тасал кунтан! *(Маруçа.)* Сана вара пĕлетĕн-и мĕн тăватăп? Урод! Нимуй! Хăй мĕнлине пĕлмест, çын каччисене хапсăнать-ах вăл. *(Маруçа чыша-чыша ярать, çӳçне-пуçне тăрмалать. Игорь Аняна чарать.)*

**Игорь.** Аня, чарăн, мĕн хăтланатăн эсĕ? Санăн аппу-çке вăл. *(Маруç каять.)*

Аня. Вĕлеретĕп эпĕ ăна. Ан чар мана! Тасал эсĕ те! Кураймастăп иксĕре те.

**Игорь**. Аня...

**Аня.** Игорь, кай тархасшăн, манн пĕччен пулас килет. Атту халех иксĕре те туласа тăкатăп.

*Игорь каять, Аня ĕсĕклесе юлать. Кăшт тăрсан Ирина килет.*

**Ирина.** Аня? Мĕн пулнă сана?

**Аня.** Нимĕн те.

**Ирина.** Ма йĕретĕн? Анне эсĕ каччăпа килнĕ терĕ.

**Аня.** Икĕ питлĕ çын вăл. Эп çуккипе усă курса аппа çумне çыпçăннă.

**Ирина.** Ан калаç-ха.

**Аня.** Лешĕ те вĕт-ха унпа юнашар ларать, макака. Савăнсах кайрĕ пуль-ха. Ун çине те хитре каччă пăхнă та-ха. *(Ура çине тăрать.)* Халех мĕнпе ту пулин çапса вĕлеретĕп ăна, тĕсĕ-пуçĕ те ан пултăр.

***Ирина*** *(чарса).* Аня, ан ухмахлан.

**Аня.** Йăлăхтарчĕ мана кун пек пурнăç, инке. Пурăнас та килмест.

**Ирина**. Мĕн калаçатăн эсĕ, Аня?

**Аня.** Игорьпе паллашсан тинех хам теле тупрăм тесе шутланăччĕ. Тинех çынсем пекех лăпкă пурнăçпа пурăнма пуçлатăп тенĕччĕ, пулмарĕ. Йĕркеллĕ пурнăç тума та чараççĕ мана.

**Ирина**. Çынна ирĕксĕр юраттарма май çук çав. Тетӳнех ил. Ăçта сӳрет, мĕнле шухăшпа çӳрет – хăй кăна пĕлет. Юратмасть вăл мана, юратман та. Эпĕ вара каçса кайсах юрататтăмччĕ ăна.

**Аня.** Халĕ вара?

**Ирина.** Халĕ те юрататăп. Анчах та çакăн пек ютшăнса пурăнса пистерет вăл хăйĕнчен. Унăн хăйĕн хĕрĕ пурччĕ, авланасшăнччĕ те пулмалла ун çине. Мĕншĕн вĕсен хушшине тăтăм-ши эпĕ çавăн чухне, мĕншĕн сивĕтрĕм эпĕ ăна унран? Хитрелĕхе курсан ытти çинчен веçех манса каятпăр çав эпир, хĕрарăмсем. Аçу та манн çинее авлантарасшăн пулнă. Пысăк çĕрте ĕçлекен хетта кирлĕ пулнă ăна. Мĕн патне пырса ситрĕмĕр ак? Хăйĕн çемйинчен хăй тарса пурăнать. Килсен те ачапа çеç калаçать, вылять унпа. Эпĕ те пур уншăн, те çук – пурпĕрех. Туятăп эпĕ, ача çеç тытса тăрать ăна манн çумра. Хăш чухне ачана чăмăртать те кăкăрĕ çумнее, вăрттăн йĕрет. Эсĕ те çавăн пек йăнăш ан ту, Аня.

**Аня.** Çук вара, инке. Эпĕ Игоре никама та памастăп. Вăл манăн! Манăн! А эсĕ? Эсĕ ху айăплă тете санпа çавăн пек пулнăшăн. Аса ил-ха пĕлтĕр пирĕн ресторанра кампа ларнине. Шкултан курссине янă иккен ăна. Эсĕ ятарласа унпа тĕл пулма пынă. Курссине пынă çын тата семйеллĕ хĕрарăм ют арçынпа варьеттесем тăрăх çӳремест.

**Ирина.** Хуп çăварна, чăн каланă эпĕ сана. Никам та мар вăл маншăн, институтра пĕрле вĕреннĕ сын кăна. Урамра ăнсăртран тĕл пултăм та, чĕнчĕ. хулана пырсан кăштах та пулин курса çӳрес килет-çке-ха. Капла та ялтан ниçта та тухса çӳрейместпĕр. Эсĕ ху çамрăк хĕр, ăнланма тивĕç мана.

**Аня.** Ĕненместĕп эпĕ сана. Çав териех таса пуль ĕнтĕ эсĕ. Мана курчĕç те – тӳрех тухса кайрĕç.

**Ирина.** Аня, мĕн калаçатăн? Мĕнле намăс маар сана?

**Аня.** Намăс симĕс мар, куçа кĕмест.

**Ирина.** Туятăп-ха эсĕ тахçаннах намăсна çухатнине. Пĕлетĕн-и мĕн илтрĕм э пун чухне çав арçынран сан пирки?

**Аня.** Мĕн?! Мĕн?! Ну, кала, мĕн?!

**Ирина.** Эсĕ сĕтĕрĕнчĕк пулнине.

**Аня.** Эсĕ ху сĕтĕрĕнчĕк.

**Ирина.** Намăссăр эсĕ! Арçынсене илĕртсе миçе хĕрарăмăн телейне татмарăн пуль. *(Каять.)*

Аня. Асту мана, каласа кăна пар кама та пулин ман пирки. Вара хам та тетене веçех каласа паратăп.

**Хветуç** *(пӳртрен тухать).* Каятăп, каятăп, ан хăра нумай ларать тесе. Сан патна çĕр кАçмА пурпĕр юлас çук. Манăн мĕн, хамăн кил çук-и? Эх, анна, хĕрĕм... *(Аняна ыталаса илесшĕн.)*

**Аня** *(пăрăнса).* Кай-ха эсĕ те пулин! Çӳрен сĕтĕрĕнсе.

**Хветуç.** Эсĕ, хĕрĕм, мана ун пек ан кала. Эпĕ ку таранччен те сĕтĕрĕнсе çӳремен-ха. Никам умĕнче те намăса кĕмен, никам арçыннине те хапсăнман. Эсĕ ху вăл сĕтĕрĕнсе çӳретĕн.

**Аня**. Халех тухса кай кунтан! Атту эпĕ сана ват çын тесе пăхса тăмастăп.

**Хветуç.** Эсĕ ман çине ан тапăн. Сан пек сĕтĕрĕнчĕксенченех хĕнеттерсе тăмăп-ха. Намăссăр эсĕ! Тьфу! Тĕнче сĕтĕрĕнчĕкĕ!

*Костя килет, кулса алă çупать.*

**Костя.** Браво! Браво! Вăйлăрах э сăна, Хветуç аппа, вăйлăрах çунтар.

**Хветуç** *(Костяна).* Санран та хăраса тăмастăп эпĕ. Тепре кăна пырса шакка алăка. Эпĕ пĕлетĕп, пĕлетĕп эсĕ мĕнле шухăшпа çӳренине.

**Костя.** Хăçан шакканă эпĕ сан алăкна?

**Хветуç.** Эпĕ сан пеккисенчен хăраканниех маар. Кĕр кăна манн пата... Манăн кашни алăк урати çумĕнче, кашни кравать айĕнче пĕрер пуртă выртать, пĕл çакна!

**Костя.** Кама кирлĕ эс?! Ых!

**Хветуç.** Ан тапăн, ан тапăн манн çума! Ыранах евти тăватăп, ыранах хуптаратăп *(Шавласа тухса каять.)*

**Костя** *(Аня патне пырать).* Мĕн, ăнса пымасть-и пурнăç?

**Аня.** Мĕн шăршласа çӳретĕн эсĕ ман хыçран?

**Костя.** Эпĕ сана асăрхаттарма килтĕм.

**Аня.** Мĕншĕн манна пурăнма памастăн эсĕ? Мĕнпе айăпа кĕтĕм эпĕ сан умăнта?

**Костя** *(сехет çине пăхса).* Санăн тата 60 секунд юлчĕ.

**Аня.** Мĕн кирлĕ сана? Кала мана – пĕтĕмпех тупса паратăп. Тăхăнмаллисем-и, машина-и, хваттер-и? Пĕтĕмпех тупса паратăп, манна çеç хăвар.

**Костя.** 45.

**Аня.** Хĕрсем интереслентереççĕ-и? Мĕнли килĕшет, çавăн пеккипе паллаштаратăп. Мана çеç ирĕккĕн пурăнма пар.

**Костя.** 30 секунд.

**Аня.** Кураймастăп эпĕ сана, мĕн тери кураймастăп... Пĕр шелсĕр вĕлерсе чунна кăларса илĕттĕм санăнне.

**Костя.** 10 секунд.

**Аня.** Хĕртсе хĕвел пăхнă чухне аçа çиçĕм çапасчĕ сана.

Костя. Сан вăхăт иртрĕ, халĕ манăн вăхăт пуçланчĕ. *(Аняна çупăрласа илет.)* Эсĕ мана хваттерсемпе, машинасемпе улăштарасшăн. Çук, Костя санăн çулу çинее тăчĕ Пулсан вилсе çĕре кĕричченех санăн çулу çинче пулĕ. Нимĕн те кирлĕ маар манна санран, мана эсĕ кирлĕ. Эсĕ мана парăнни, эсĕ мана ачашлани. Эпĕ те сана ачашлăп. Эпĕ ачашланă

пек сана ку таранччен никам та ачашласа курманнине туйтарăп. Эпĕ пилĕк çул çак кун çитессе ĕмĕтленсе пурăнтăм. Эсĕ вара Костяна ухмах вырăнне хурасшăн. Ут атя! *(Аняна чышса ярать.)*

**Аня.** Ниçта та каймастăп эпĕ санпа.

**Костя.** Каятăн, мĕнле йышши каятăн-ха тата.

**Аня.** Кăшкăратăп.

**Костя**. Кăшкăрса эсĕ ху вали ху шăтăк çеç алтатăн. *(Чышать.)*

**Аня.** Ан тĕкĕн мана!

**Костя.** Ут!

*Аякра Игорь курăнса каять.*

**Аня.** Каймастăп!

**Костя.** Каятăн!

**Аня.** Ну, ме, ме, тăран...

**Костя.** Паçăрах çавăн пек кирлĕ те! Атя.

*Костя Аняна аллинчен ярса илет те илсе каять. Маруç килет.*

**Игорь**. Маша! *(Маруç сиксе ӳкет.)* Маша!

**Маруç.** Кай, Игорь.

**Игорь.** Атя манпа. Аняран хăратăн пулсан атя вăрттăн таратпăр.

**Маруç.** Çук, эпĕ пултараймастăп.

**Игорь.** Эпĕ килĕшместĕп-и сана?

**Маруç.** Килĕшсен те, чунтан-вартан юратсан та пултараймастăп эпĕ, Игорь.

**Игорь.** Мĕншĕн?

**Маруç.** Тем пекех каяс килсен те юрамасть мана.

**Игорь.** Мĕншĕн? Мĕн тытса тăрать вара сана кунта? Аня сисе те юлаймасть вăл. Эпĕ ăна халь тин пурпĕр качча илместĕп.

**Маруç.** Çук, Игорь.

**Игорь.** Аçунтан хĕратăн-и? Эпĕ унпа калаçăп, вăл ăнланĕ.

**Маруç.** Çук-çук, атте пĕлсен пушшех те ямасть.

**Игорь.** Мана шанмастăн-и?

**Маруç.** Шанатăп.

**Игорь.** Юратмастăн-и?

**Маруç.** Эсĕ çав тери ырă кăмăллă пулсан, пулăш эппин мана.

**Игорь.** Эпĕ саншăн тем тума та хатĕр.

**Маруç** *(ун-кун пăхса илсе).* Мана вăхăтлăха та пулин пурăнма вырăн кирлĕ: хулара-и, ялта-и – пурпĕрех. Кунтан çеç аяккарах пултăр. Эпĕ сансăрах, пĕчченех кайăттăм, анчах та манăн паспорт çук, атте пытарса хунă ăна. Мана пурăнмалли пӳлĕм кирлĕ. Ĕçшĕн хăрамастăп эпĕ, хăть те мĕнле еçе те вырнаçма хатĕр.

**Игорь.** пирĕн веçех пулать: пӳлĕмĕ те, хваттерĕ те.

**Маруç.** Çук-çук, эсĕ манпа ĕмĕрлĕхех çыхланас тесе ан шутла. Кайран ак каланă сăмахусемшĕн те ӳкĕнĕн. эсĕ веçех пĕлместĕн-ха ман çинчен. Манăн ача пур.

**Игорь.** Ача? Санăн? Ăçта вара вăл?

**Маруç.** Хытă ан калаç, илтме пултараççĕ. Ача çуртĕнче вăл манăн тĕпренчĕкĕм, манăн пепкеçĕм, манăн юратнă ывăлăм.

**Игорь.** Мĕншĕн унта хăварнă вара эсĕ ăна юрататăн пулсассăн?

**Маруç.** Эпĕ леçнĕ тетĕн-и ăна унта? Ăна эпĕ леçмен. Ăна манаран роддомран тухсанах атте утртса илчĕ. Атте хаярлăхне пулах çакăн пек асап курса пурăнатăп эпĕ. Хамăн ывăла та кăкăр çумне чăмăртаймастăп. Халĕ пысăк ĕнтĕ вăл, тăваттăра. Пĕлтĕрех пĕлмен чĕлхи çукчĕ, тем те калаçатчĕ. Эпĕ ун патне пĕлтĕр атте чирлесе больницара выртнă чухне кайса килтĕм. Атту ямасть вăл мана. Игорь, манăн хамăн ачана хамăнах çитĕнтерес килет. Пулăш амна, вара эпĕ саншăн тем тума та хатĕр пулăп.

**Игорь.** Мĕншĕн çавăн пек хытланнă вара аçу?

**Маруç.** Ха! Эсĕ пĕлместĕн-ха. Аттене ăна чыс кирлĕ, пуянлăх. Çавăнпах манна пĕр пуçлăх ачине качча парасшăнччĕ. Эпĕ яхăнне те ямарăм. Чăтма пултараймастăп эпĕ ун пек каччăсене. Атте пекех мăнкăмăллăччĕ. Ăçта унта, пырса ан перĕн. Аттепе каварлă пулса мăшкăлларĕ вăл мана. Пĕр шăматкун мунчана пĕччен кайсан атте юри кĕртсе янă ăна манн пата. Ах, Игорь... *(Игорь хулпуççийĕ çине пусне хурса йĕрет.)*

**Игорь.** Маша, ан йĕр.

**Маруç.** Кураймастăп эпĕ аттене, ылханатăп ăна.

**Игорь.** Эпĕ ăнланатăп сана.

**Маруç.** Пулăш мана, Игорь. Куç курми тухса тарас килет манăн ку çуртран. Мана малтанласа паспортпа пурăнмалли вырăн кирлĕ.

**Игорь.** Пулăшатăп, Маша. Паспортне те тăватпăр, пурăнмалли вырăнне те пире чаçре параççĕ. Ачуна илетпĕр те каятпăр. Мĕн ятлă вăл?

**Маруç.** Митя. Дмитрий. Дмитрий Кулаков. Вăт халĕ эсĕ ман çинчен веçех пĕлетĕн. Кун çинчен никам та пĕлмест, аня та пĕлмест. Аттепе анне кăна тата хветуç аппа. Эпĕ ăна хам каласа патăм. Вăл çеç манн хута кĕрет. Атте питĕ вăрттăн хытланма пĕлет вăл. Мана хырăмлă чухне пытарса усрарĕç вĕсем. Çуратасса та эп районта мар, аякра çуратрăм. А эсĕ манна юрататăп тен, качча илесшĕн. Эх, эсĕ те çав, Игорь.

**Игорь.** Эсĕ чăнласах килĕшетĕн манна, Маша. Антив ачаллă пул, эпĕ ăна хамăн ывăл тăвăп. Пирĕн тата та ачасем пулĕç, эпир телейлĕ пулăпăр.

**Маруç.** Ман çинчен ан ĕмĕтлен. Урăххипе палаш, качча ил ăна.

**Игорь.** Çук, манна эсĕ çеç кирлĕ. Маша, атя çакăн пек калаçса татăлатпăр. Эпĕ паянах кайса Шупашкара çитетĕп. Ыран ир-ирех ача çуртне каятăп. Тепĕр кун вали пĕтĕм документсем хатĕрлесе хуччĕр. Вара виçмине систермесĕр кунтан каятпăр.

**Маруç.** Тем пекехчĕ те çапла пулсан. *(Игорь çинее пуçне хурса йĕрет.)*

**Игорь.** Маша... Мĕншĕн? Ан йĕр.

**Маруç.** Хĕпĕртенипе эпĕ, Игорь. Телейĕм эсĕ манăн.

*Хветуç çари çухăрса килет.*

**Хветуç.** Эй, турах! Эй турах!.. Аçа çиçĕм кăна çапса пăрахтăр вĕсене. Тьфу, намăссăрсем! Мĕн хăтланатăр? Ах, хăранипе чĕре вырăнтан куçрĕ пуль. Пĕчĕк пахчана тула ларма тесе тухрăм та, курах кайрăм. Хурлăхан хыçĕнче вырта параç. Эй, тур, тур...

*Шав илтсе Караççăм тухать.*

**Караççăм.** Мĕн пулнă тата? Ма кăшкăратăр?

**Хветуç.** А, мĕн... нимĕн те, нимĕн те пулман.

**Караççăм.** Çынсен сехрисене хăптарса çӳрен. Çĕр варринче кам çавăн пек çухăрать.

**Хветуç.** Вара ачасем пахчана панулми вăррине кĕнĕ те: «Тураттисене хуçатăр вĕт, çĕртен пуçтарсан юрамасть-и»,- тетĕп.

**Караççăм**. Елис сĕтел хатĕрлерĕ. Атьăр пӳрте кĕрер. Хамăр çеç пулсан та çураçас йĕркине туса ирттерер.

**Хветуç.** Кунта мĕн-ха...

**Караççăм.** Анна ăçта тата? Мĕн пĕри те чĕнместĕр? Е хăлхасăр пултăр-и? Кĕрӳ, санран ыйтатăп.

**Аня** *(килет).* Мĕн, мана тунсăхласа çитрĕр-и? Акă вăл эпĕ. Мĕн тăвасшăн манпа? Атя, атте, яра пар! Туй тăвас-тăк туй тăвас.

**Игорь.** Эпĕ каçару ыйтатăп: халь çеç ял советĕнчен килсе каларĕç. Мана срочно военкомата чĕнтереççĕ.

**Караççăм.** Мĕнле-ха апла? Эпир вара?

**Аня.** Сана? Срочно? Игорь, эпĕ те санпа.

**Игорь**. Çук, эпĕ хам çеç каятăп. Халь тĕттĕмленчĕ ĕнтĕ. Ан пăшăрхан, сана илме килетĕп эпĕ.

**Караççăм**. Ăçтан шыраса тупнă вара вĕсем сана?

**Игорь.** Эпĕ Шупашкарта хам ăçта кайнине каласа хăварнăччĕ. Каçарăр, служба.

*Игорь каять. Караççăмпа Аня ним тума пĕлмесĕр тăраççĕ.*

*Чаршав.*

**2 пайĕ.** *Çавăнтах, тепĕр куне. Каç енне сулăннă вăхăт.Аняпа Караççăм хăйсем вали вырăн тупаймасăр çӳреççĕ. Еслипа Маруç та кунтах. Пурте салху.*

**Аня.** Халь те çук. Ку таранччен военкоматра тăмасть пуль ĕнтĕ. Вăл кайни сутка çитет. Эпĕ унта каятăп та, пĕтĕмпех пĕлсе килетĕп.

**Караççăм.** Лар кутна хĕссе! Ман хĕрсем сĕтĕрĕнчĕксем маар каччăсем хыççăн лиска йытă пек çӳреме.

**Аня.** Тен ăна тӳрех чаçне ăсатнă, киле килме те вăхăт паман пуль.

**Караççăм.** Апла пулсан шăнкăравласа та пулин пĕлтермелле, сирĕн халĕ кашнин аллинче телефон.

**Аня.** Телефонне те тытмасть вăл.

**Караççăм.** Çук, мана намăс кăтартасшăн пулнă вăл. Нимĕнле военкомата та кайман пуль-ха, юри тарса кайнă пуль.

**Елис.** Тем ан калаç-ха, Караççăм.

**Караççăм.** Малтанах килĕшмерĕ вăл манна, малтанах пурнăç тăвакан арçын пулассăн туйăнмарĕ. *(Аняна.)* Эсĕ айăплă пуриншĕн те! Качча каять имĕш, хитрее каччă тупнă. Мĕне кирлĕ манна ун хитрелĕхĕ, картинка çинее пăхнă пек пăхса ларма-и? Мана пурнăç тума пĕлекен кĕрӳ кирлĕ. Сире, хĕрарăмсене, ак çакăн пек çăвахласа пурăнакан кĕрӳ кирлĕ. Пире кăшт та унран пулăш пулмасан мĕне пĕлсе манн ăна хĕр парса лармалла тет?

**Аня.** Юрататăп эпĕ ăна, атте.

**Караççăм.** Вон, карта хыçне кайсан кирлĕ вăл сан юратăву. Юратсан юрат чăн-чăн арçынна. Тен хирĕçнĕ эсир?

**Аня.** Мĕн тума хирĕçмелле тет пирĕн, паллашни те пĕр эрне кăна.

**Караççăм.** Ну, параç тăк параç. Пĕр эрне хушшинче пурнăç тума шутланă вĕсем. Таси паха!

**Елис.** Караççăм...

**Караççăм.** Мĕн Караççăм? Мĕн Караççăм? Утмăл çул эпĕ Караççăм. Ку тарана çитсе манна никам та намăса кĕртмен, пурте манран хăраса тăнă. Çав шĕшлĕ авринчен те эпĕ хама намăс кăтарттармастăп.

**Аня** *(Маруçа).* Тен эсĕ мĕн те пулин сӳпĕлтетсе панă? Мĕн аларăн ăна?

**Маруç.** Нимĕн те каламан эпĕ.

**Аня.** Ма апла пулсан унпа юнашар лараттăнччĕ? Эсĕ ăна мана сивлесе темтепĕр каласа панă.

**Маруç.** Çук.

**Аня.** Ху качча каяйманнипе эпӗ те качча каясран хăрарăн-и? Мӗн каларăн ăна?

**Караççăм.** Эсӗ, Маруç, асту. Пӗрре мана намăс кăтартрăн, тата мӗн те пулин шутлатăн пулсан ак çак алăсемпех пăвса пăрахатăп.

**Елис.** Караççăм...

**Маруç.** Мӗн тăрăнтăр эсир ман çинее? Мӗн турăм эпӗ сире? *(Йӗрсе ярать.)*

**Аня.** Эпӗ сана кӗтсе пурăнмастăп, пурпӗрех качча каятăп.

**Костя** *(килет).* Тӗрӗс, Аня. Каччă пур чухне мӗншӗн качча каймалла мар? Качии те кунтах. Ну, Караççăм тете, йышăн мана, сан хӗрне çураçма килтӗм.

**Караççăм.** Эпӗ сана хӗр маар, кукамая та качча памастăп.

**Костя.** Çав териех начар çын-и вара эпӗ? Пурнăмалăх ăс çук-и, ӗçлемелӗх вăй çук-и? Ан хăра, хӗрне çăкăрсăрах лартмăп.

**Караççăм.** Вăрласа та пулин тăрантарса пурăнăп тесшӗн-и? Вăрланă çăкăрăн тутти çук унăн. Çăкăра ăна ӗçлесе илмелле, тар витӗр унăн техемлӗхне туймалла. Çавăн чухне çеç вăл çисе тăранмалла маар тутлăн туйăнать. Эсӗ вара – тӗрме йытти. Ирӗклӗ пурнăç мар, тӗрме саншăн тунсăхласа ларать.

**Костя.** Ытлашши хăртатăн, Караççăм тете.

**Караççăм.** Эпӗ санăн тетӳ мар, тӗрмери надзиратель сан тетӳ.

**Костя.** Ну-ну, Караççăм тете, хăвăн сăмахусемшӗн ӳкӗнмелле пулса ан тухтăр. Эпӗ сан патна шӳтлеме килмен, сан хӗрне илме килнӗ.

**Караççăм.** Эпӗ сана паратăп хӗр, эпӗ сана...

**Елис.** Туршăн та пулин чарăнăр! Костя, мӗн калаçатăн эсӗ?

**Костя.** Мӗн шутлатăп, çавна калатăп. Ну, паратăн-и мана Аняна?

**Караççăм.** Кай халех кунтан тухса, е эп сана...

**Костя.** Мӗн? Мӗн эсӗ манна? Чӗлхӳне çăтрăна? Асту, эпӗ кӳренме те пултаратăп. Халӗ памасан, ак кайран хăвах ăна манна качча парасшăн пулăн та, ун чухне вара эпӗ шутласа пăхăп илмелле-и санан хӗрне е çук, тивӗçлӗ-и вăл мана е тивӗçлӗ мар тесе.

**Елис.** Костя, ачам, ырă çын пулса кай кунтан. Эсӗ хуйхă тумасан та пирӗн хуйхă пуç тӳпинченех.

*Игорь килет.*

**Игорь.** Здравствуйте! Каçарăр мана, иртерех килме май пулмарӗ.

**Костя.** Акă кӗтнӗ хăна та çитрӗ. Атту эпир кунта сана иртенпе кӗтсе хăшкăлтăмăр. Ăçта кайса çӗтрӗ-ши пирӗн кӗрӳ тетпӗр. Аняран чипертереххине тупса унпа каймарӗ-ши тетпӗр.

**Аня.** Игорь, мӗн терӗç военкоматра?

**Игорь.** Тепӗр эрнере эпӗ чаçре пулмалла. Унчен туй тума та вӑхӑт пур.

*Игорь Маруç енне пӑхса илет, Маруç унран тем кӗтсе пӑхса тӑрать.*

**Караççӑм** *(лӑпкӑн).* Юрӗ, атьӑр пурте пӳрте кӗрер. Калаçу пирӗн урамра калаçмалли мар. *(Пурте кӗреççӗ, юлашкинчен Костя та кӗресшӗн, караççӑм ӑна кӗртмест.)* Намӑсна веçех çухатнӑ иккен эсӗ. Кай кунтан! Ман çуртра сан вали вырӑн çук.

**Костя.** Ну, юрӗ, асра тытӑпӑр.

*Караççӑм кӗрсе каять, Ирина килет.*

**Ирина.** Салам.

**Костя.** Салам. *(Пауза.)* Тӑхта-ха.

**Ирина.** Мӗн тата?

**Костя.** Калаçмалли пур. Унта халӗ пӗрне çураçма пуçлаççӗ. Кала эсӗ унта прапорщик текеннине е халех тухса кайтӑр пирӗн ялтан, каймасан кайран вӑл кунтан сывӑ каяймасть.

**Ирина.** Турӑçӑм, мӗн шутласа хунӑ эсӗ, костя? Тӑна кӗр.

**Костя.** Вӑрттӑн кала. Караççӑм тетен хӑлхине ан кӗтӗр ку сӑмах.

**Ирина.** Çынсем телейлӗ пуласран хӑратӑн-и?

**Костя.** Эпӗ нумай калаçма юратмастӑп. Кала кӗрсе, каймасан – вӗлеретӗп.

**Ирина.** Турӑçӑм...

*Костя каять, Ирина пӳртне кӗме тӑрать, ӑна хирӗç Караççӑм тухать*.

**Караççӑм.** А, кин, эсӗ-çке. Кӗр, кӗр атя пӳрте. *(Тимлесе пӑхса çаврӑнать.)* Мӗн пулнӑ сана?

**Ирина.** Нимӗн те.

**Караççӑм.** Миша ӑçта тата?

**Ирина.** Пӗлместӗп, çӗркӗ киле таврӑнмарӗ вӑл. Кала-ха ӑна мӗн те пулин, атте. Эпӗ ӑна куç умӗнчех çухататӑп.

**Караççӑм**. Пӗрре те йӗркеллӗ пурӑнма çук сирӗнпе. Хуӑхӑрмалли тупсах тӑратӑр то пӗри, то тепри.

**Ирина.** Кай та аттепе пурӑн, эпӗ сана качча илес темен – акӑ ун сӑмахӗсем.

**Караççӑм.** ну, э пӑна кӑтартӑп-ха. Атя, кӗр пӳрте, килӗ-ха.

*Ирина кӗрсе каять. Хветуç килет.*

**Хветуç.** Караççӑм... *(Караççӑм ун çинее пӑхса илет те ним чӗнмесӗр кӗрсе каять.)* Чӗнмерӗ мана Караççӑм. Ытлашши çын терӗ пуль. Усал çав вӑл, усал. Усал çеç те маар, хаяр. Ӗçме-çиме ытлашши пӗтесрен хӑрарӗ пуль. Ан хӑра, санӑнне пит еçсе-çисех кайман-ха. *(Йӗнӗ пекех.)* Мана хурлантарас терӗ пуль. Хурланса пӗтнӗ ман. Эх, пурнӑç! Ма ӗмӗре пӗччен пурӑнса ирттермелле пулчӗ-ши?

**Маруç** *(тухать, вăл пĕр тĕрке тытнă).* Хветуç аппа...

**Хветуç** *(шартах сиксе).* А? Ах, Маруç, эсĕ-çке. Хăратсах пăрахрăн.

**Маруç.** Хветуç аппа, пулăш-ха мана. Ак çакна килне кайса хур-ха. *(Тĕркине кăтартса.)* Ача япалисем унта Митька вали, хамăн та тăхăнмаллисем.

**Хветуç.** Мĕ-ĕн?

**Маруç.** Эпир Игорьпе вăрттăн тухса каясшăн. *(Хветуç тĕлĕннипе кăшкăрса ярасран çăварне хуплать.)* Çĕркĕ вăл аттесене военкомата каятăп тесе улталаса Шупашкара ача çуртне кайса килчĕ. Эпĕ унпа калаçаймарăм-ха, анчах пӳртре куç хĕссе систерчĕ, ĕç тухнă пулмалла. Эпир Митькана ача çуртĕнчен илсе каясшăн.

**Хветуç.** Вăт лайăх та. Эпĕ ăна хăйне те каларăм Аннапа ан çыхлан тесе. Кӳр кунта япалусене. *(Маруç аллинчен тĕркине илет.)* Саншăн эпĕ тем тума та хатĕр. Аçу вилмеĕр ку килте пурпĕр телейлĕ пулаймастăн. Вара ачуна илсен ăçта каясшăн-ха ĕнтĕ?

**Маруç.** Игорь хăйпе илсе каясшăн, юрататăп тет.

**Хветуç.** Кай-кай, унран ан юл. Ачи лайăх вăл. Ним те иккĕленсе ан тăр, кай. Вара ху мĕнле? Ху та юрататăн-и ăна?

**Маруç.** Пĕлместĕп, чунăм ун еннех туртăнать. Ах, Хветуç аппа, мĕн пулса тухĕ-ши?

**Хветуç.** Веçех лайăх пулать, ак каларĕ тейĕн. Аннана çавă кирлĕ ăна, ав кайтăр Кĕçтӳкпа.

**Маруç.** Эсĕ пахсана тухакан алăкусене питĕрсе ан хур-ха.

**Хветуç.** Юрĕ, хĕрĕм, юрĕ, веçех уçса хуратăп.

*Маруç пĕр енне, Хветуç тепĕр енне тухса каяççĕ. Пӳртрен Игорь тухать, такама шырать, ун хыççăн Аня тухать.*

**Аня.** Игорь! Игорь, пуçтарăн атя, эпир каятпăр.

**Игорь.** Аня, эпĕ ниçта та каймастăп.

**Аня** *(аякка сăнаса).* Нумай калаçса ан тăр, пирĕн вăхăт сахал, е ĕнер сахалтарах лекрĕ-и?

**Игорь.** Эпĕ ниçта та каймастăп.

**Аня**. Мĕнле каймастăп пулать вăл тата? Ку мĕн сан ялу-и, сан килӳ-и? Кама кирлĕ эсĕ кунта? Эпĕ те никама та кирлĕ мар.

**Игорь.** Эпĕ пурпĕрех ниçта та каймастăп.

**Аня**. Ăнлан-ха эсĕ, Игорь, килĕшмерĕн эсĕ аттене. Ăна урăхла кĕрӳ кирлĕ.

**Игорь.** Костя пекки-и?

**Аня.** Пыратăн-и эсĕ çук-и?

**Игорь.** Çук.

**Аня.** Мĕн тытса тăрать вара сана кунта? Кам тытса тăрать? Е çав çуламан пăру килĕшсе кайрĕ-и?

**Игорь.** Ун ҫине ан тăрăн, Аня. Ăна сивлесе те пĕр сăмах та ан кала.

**Аня.** Мĕне пĕлтерет куп ĕтĕмпех? *(Игоре тытса силлет.)* Мĕн пулнă сана? Часрах, Игорь, эпĕ хăвна шеллесе калатăп. Кунта каллех Костя килсе ҫитме пултарать.

**Игорь.** Ман хăраса пĕтнĕ унран.

**Аня**. Мĕн пулса иртет кунта? Нимĕн те ăнланаймастăп эпĕ. Мĕн пулса иртет кунта? Игорь, пăх-ха манна куҫран. Кала мана тĕрĕссине: мĕн пулчĕ сана? Текех эпĕ сана интереслентерместĕп-и? Эсĕ текех мана юратмастăн-и? Кирлĕ мар-и эпĕ сана?

**Игорь.** Нимĕн те ан ыйт.

**Аня.** Юрататăп эпĕ сана. Сана юратнă пек эпĕ никама та юратса курман. Ма сивлетĕн манна? Тен эсĕ Костяна пула? Ма ĕненетĕн ăна?

**Игорь.** Мĕншĕн кунта Костя? Эпĕ унпа ҫур сăмах та калаҫман.

**Аня.** Эппин Маруҫ. Манăн пĕртен-пĕр аппа манăн ҫул ҫине урлă тăнă.

**Игорь.** Ҫук.

**Аня.** Эсĕ манăн, манăн! Никама та памастăп эпĕ сана! Вилсен те памастăп. *(Игоре ҫупăрлать, лутăркать.)* Игор, тусăм, чунăм, итле-ха мана...

**Игорь.** Тăна кĕр, Аня.

**Аня.** Юрататăп эпĕ сана, никама та памастăп сана. Эсĕ манăн. Эпĕ те санăн. Кала эсĕ манăн тесе. Кала, кала манăн те, Игорь, кала... *(Игоре какăрĕнчен чăмăрĕпе тӳнккет.)*

**Игорь.** Аня...

**Аня** *(сасартăк).* Е манăн, е никамăн та. Халь тин эпĕ вĕҫертместĕп сана. Манран пăрăнатăн пулсан эпĕ сана... Эпĕ пĕлместĕп хам тĕн тăвассине те.

**Игорь.** Лăплан, Аня.

**Аня.** Тен эсир Маруҫпа паҫăрах калаҫса татăлнă? Паллах. Мĕнле-ха эпĕ ҫавна та тавҫăрайман.

**Игорь**. Нимĕн те калаҫса татăлман эпир. Ҫапла, вăл мана килĕшет. Эпĕ ăна мĕнле иккенне витер куратăп. Сана вара... Кам эсĕ? Ку тарана ҫитсе те эпĕ туйса илеймерĕм. Эсĕ манран тем пытаратăн. Эсĕ мана тем каласа ҫитерейместĕн.

**Аня.** Эпĕ хам ҫинчен сана пĕтĕмпех каласа панă.

**Игорь.** Суятăн.

**Аня.** Чăн калатăп.

**Игорь.** Ĕненместĕп эпĕ сана.

**Аня.** Сана Маруҫ тем сӳпĕлтетсе панă.

**Игорь**. Нимĕн те каламан вăл мана.

**Аня.** Ăҫта вăл? Эпĕ халех унăн мелкине лăскаса кăларатăп.

**Елис** *(тухать).* Анна, çăта çӳрен эсĕ? Кĕр халех пӳрте, сĕтел çине майламалла. Хамăршăн маар вĕт, саншăн тăрăшатпăр.

**Аня**. Мĕне кирлĕ мана сирĕн сĕтелĕр!

**Елис**. Кур-ха ăна мĕнле калаçать. Кĕр атя, атту халех аçуна каласа паратăп.

**Аня**. кала. *(Каять.)*

**Елис.** Анна! Анна, теп! *(Аня хыççăн каять.)*

*Тепĕр енчен Маруç килет.*

**Маруç.** Игорь...

**Игорь.** Маша! *(Ăна ыталаса илет.)*

**Маруç.** Ну, мĕнле, ача çуртĕнче пултăн-и?

**Игорь.** Пултăм, веçех йĕркеллĕ пулать. Документсене хатĕрлесе хуратпăр терĕç.

**Маруç.** Митькана... Митькана куртăн-и?

**Игорь.** Куртăм. Мĕн тери лайăх ача вăл санăн. Сан патна килнĕ терç те, тӳрех манн пата «атте» тесе чупса пычĕ. *(Маруç куççӳлне шăлать.)* Эх, савăнса кайрĕ. «Ман пата атте килнĕ, манн пата атте килнĕ»,- тесе кăшкăрать. Пирĕн ял советĕнчен справка илмелле пулать тата.... Тата сана хулара психиатра кăтартмалла пулать.

**Маруç.** Мĕншĕн?

**Игорь.** Унран справка илмелле эсĕ сывă тесе. Пĕлетĕн-и, аçу Митькана парса хăварнă чухне заявленийĕ çинее эсĕ чирлĕ, çавăнпа хăйĕн ачине çитĕнтереймест тесе çырса хăварнă.

**Маруç.** Эпĕ ухмах тесе. Çапла-и?

**Игорь.** Çапла. Эсĕ ухмах мар вĕт. Справкине ăна çырса парĕç.

**Маруç.** Çавăнпа мана пурте ухмах вырăнне хураççĕ. *(Аякра Аня курăнса каять, вăрттăн сăнать.)*

**Игорь.** Пирĕн халĕ кунтан çеç каймалла. Пуçтарăн атя, пире илме машина килмелле. Эпĕ ăна тĕттĕмленсен ял хĕрринче кĕтсе ларма каларăм. Тен килчĕ те пулĕ ĕнтĕ.

**Маруç**. Эпĕ хамăн япаласене те, Митька вали илсе хунисене те Хветуç аппана парса ятăм. Унта çипуçа улăштаратпăр та каятпăр.

**Игорь.** Васкар эппин никам та сисмен чухне.

*Игорьпе Маруç каяççĕ. Аня хытса тăрать, кайран пӳрт алăкне уçса кăшкăрать.*

**Аня.** Атте! Атте, тух-ха часрах! Атте!

*Караççăмпа Елис тухаççĕ.*

**Караççăм**. Мĕн пулчĕ?

**Аня.** Атте, Маруç килтен каять.

**Караççăм**. Мĕн?

**Елис.** Ăçта?

**Аня.** Пĕлместĕп. Эпĕ вăл Игорьпе калаçса тăнине куртăм. Вĕсем пĕрле каяççĕ. Чар-ха вĕсене, атте.

**Караççăм** *(пиçиххине салтса).* Эпĕ ăна ярап... Ăçта вĕсем?

**Аня.** Хветуç аппа патне каçрĕç.

**Елис.** Мĕнле-ха капла? Килти ĕçсене кам ĕçлемелле вара вăл кайсан?

**Караççăм.** Иккĕшне те ак çак чăн пиçиххипе ислететĕп.

*Караççăмпа Елис каяççĕ. Костя килет.*

**Костя.** Аня!

**Аня.** Кай кунтан! *(Кĕрсе каясшăн.)*

**Костя** *(Анян çулне пӳлсе).* Аня, ан васка.

**Аня.** Ман вăхăт çук. Хăвар мана. Ма манăн кашни утăма йĕрлесе çӳретĕн?

**Костя.** Аня, ан хйра, тĕкĕнместĕп эпĕ сана. Калаçар-ха чуна уçса.

**Аня.** Чуна уçса? Эсĕ ун пек калаçма та пĕлетĕн-и?

**Костя.** Эпĕ çын мар-и вара? Аса ил-ха хамăрăн ачалăха, çамрăклăха. Мĕнле телейлĕччĕ эпир ун чухне.

**Аня.** Ухмах пулнă эпĕ ун чухне, пурнăç мĕнне пĕлмен.

**Костя.** Эпĕ ун пирки мар. Эсĕ килĕшеттĕнччĕ мана. Эпĕ те килĕшнĕ сана.  Халĕ те килĕшетĕн мана. Антив эсĕ хулара арçынсене кашни каçах улăштарнă пултăр, эпĕ те таса çын мар. Атя пĕрле ăçта та пулин тухса каятпăр. Эпĕ сана телейлĕ тăвăп.

**Аня.** Хупа пĕрле тĕрмене илсе каясшăн мар-и тата? Çук, Костя, манăн урăххи пур.

**Костя.** Çавă-и? Эпĕ сана памастăп ăна.

**Аня.** Тархаслатăп сана, ан чар мана. Эпĕ сана тав тăвăп. Мĕн кирлĕ - веçех тупса паратăп. Манн пеккисене эсĕ тата та тупма пултаратăн.

**Костя.** Кирлĕ мар мана сан пекки, мана эсĕ кирлĕ.

**Аня.** Çук, нихăçан та.

**Костя.** Йăлăнатăп сана, ман чăтăмлăха ан тĕрĕсле. Е эсĕ манăн пулатăн, е эпĕ халех кĕрсе сан çинчен тĕрĕссине пĕтĕмпех аçуна каласа паратăп.

**Аня.** Çук.

**Костя.** Ну, юрĕ. Веçех эпĕ палăртнă пек пулса пырать.

**Аня**. Мĕн палăртнă пек?

**Костя.** Салтăн атя.

**Аня.** Çитет манран кулса!

**Костя**. Салтăн теççĕ! Е эпĕ хам туртса çурса антарасса кĕтетĕн-и?

**Аня.** Эсĕ хăяймастăн.

**Костя.** Мĕнле йышши хăятăп-ха тата. Хăвăрт!

**Аня.** Çук!

**Костя.** Ах, пардон. Варьетере эсĕ укçалла çеç ташлама хăнăхнă-çке. Ак ме ил*. (Аня ури айне укçасем ывăтать.)*

**Аня.** Пăчлан хăвăн укçупа.

**Костя.** Музыка çитмест-и? Айн момент! *(Магнитофон ярать.)* Ну! Кама калаççĕ! Ну! *(Анян тумтирне туртса хывать.)*

**Аня.** Костя, ан ухмахлан.

**Костя.** Кăтартса пар-ха варьетере мĕнлерех ташланине. Эсир унта укçашăн тем тума та хатĕр вĕт. Салтăнма та, ташлама та пĕçĕсене уçса. Укçаллă пулсан сухаллă старик айне кĕрсе выртма та... Ташла атя!

**Аня.** Çук!

**Костя** *(Аняна çупа-супа ярать).* Ташла теççĕ!

**Аня.** Ирсĕр! Кураймастăп эпĕ сана.

*Костя (кĕсъинчен кĕленче савăт кăларать).* Ак çакăнта кислота. Енчен те ăна сан питӳ çинее сапсан çĕр çулхи карчăк та санран хитререх пулать. Ун чухне эсĕ нимĕнле варьетере те ташлаймастăн, нимĕнле Игоре те кирлĕ пулмастăн. Ташла! *(Савăтне уçса Аня пуçĕ çине тытать.)*

**Аня.** Костя! *(Шăппăн.)* Турăçăм, анне... *(Малтан ирĕксĕр, кайран вăйлăран та вăйлăрах ташлама пуçлать.)*

**Костя** *(Аня йĕри-тавра çаврăнса).* Лайăхрах, лайăхрах, варьетери пек... Арçынсене астарас тесе мĕнле авкаланатăр-ха эсир унта? Вăт çавăн пек! Браво! Браво!

*Маруçа пиçиххипе хĕнесе Караççăм килет, ăна чарас тесе Игорь, Елис, Хветуç килеççĕ.*

**Маруç.** Пурпĕрех каятăп эпĕ.

**Караççăм.** Ниçта та каймастăн эсĕ! Ак сана! *(Çапать.)*

**Игорь.** Чарăнăр! *(Караççăм аллинчи пиçиххине утртса илет. Костяпа Аняна курсан пурте хытса тăраççĕ.)*

**Караççăм.** Мĕне пĕлтерет ку? *(Аняна.)* Эсĕ мĕскер хытланатăн кунта? Халех çапса вĕлеретĕп!

**Аня** *(Костя енне тӗллесе).* Вӑл мана ирӗксӗр...

**Костя.** Караҫҫӑм тете...

**Караҫҫӑм.** Мӗн тӑватӑн эсӗ ман хӗре?!

**Костя.** Караҫҫӑм тете...

**Караҫҫӑм.** Эпӗ сан тетӳ мар. Вӗлеретӗп сана. *(Костяна хӑмсарса пырать.)*

**Костя.** Ҫитӗ! Ҫитӗ манн ҫинее кӑшкӑрса! Халӗ мна итлӗр, пурте итлӗр. Эсӗ к ухӗрне *(Аня ҫинее кӑтартать.)* юратса пурӑнатӑн, ачаша вӗрентрӗн, яланах ун майлӑ туса пыратӑн. Ҫав вӑхӑтрах ӑна *(Маруҫ ҫине кӑтартать.)* тарҫӑ вырӑненче усратӑн.

**Караҫҫӑм.** Сан ӗҫ ҫук ман ҫумра. Тупӑннӑ кунта мана ӑс паракан. Тӗрме йытти!

**Костя.** Итле, итле мана. Аняна мухтаса пурӑнатӑн, ҫав вӑхӑтрах Маруҫа пӗр ӑшӑ сӑмах каламастӑн. Халӗ те ӑна вуннӑри ачана хӗненӗ пек каччӑсем умӗнче чӗн пиҫиххипе хӗнетӗн, ун телейне таптасшӑн. Телйе тивӗҫли вӗт ку мар, ку. Аняна хӳтӗлетӗн, а эсӗ пӗлетӗн-и...

**Аня.** Костя, чарӑн! Йӑлӑнатӑп сана...

**Костя.** Ҫакӑн пек ҫарамасланса ташласси вӑл – унӑн ӗҫӗ. Кашни каҫ варьетесенче ташласа вӑл ӳсӗр арҫынсене килетнерсе пурӑннӑ. Эсӗ вара ӑна вӗренет тесе шутланӑ, учитель пулать тенӗ. Пӗр курс пӗтеричченех пӑрахнӑ вӑл институтне. Варьете хыҫҫӑн вара кам укҫа ытларах сӗнет - ҫавӑнпа.

**Караҫҫӑм.** Тасал кунтан! Манӑн хӗрсем нихӑҫан та ун пек аташса пурӑнман.

**Костя.** Ҫапла, санӑн хӗрӳ, Анна Герасимовна так сказать, «педагог». Паллах эсир пурте ӑна ӗненсе лартнӑ. Мӗнех, ҫука пур тума маҫтӑр вӑл. Ыйт-ха эсӗ унран миҫе арҫын тутанса курнӑ вӑл паян кунччен.

**Караҫҫӑм.** Ку тӗрӗс мар. Эсӗ кунта пирӗн пиите варалас тесе ан тӑр. Манӑн хӗрсем святуй пекех таса.

**Костя.** Маруҫ тен ҫапла та пулӗ, анчах та ак ҫакӑн пирки йӑнӑшатӑн вара.

**Караҫҫӑм**. Чарӑн! Халех ҫапса пӑрахатӑп!

**Костя.** Ӑҫтан тен эсӗ ҫак хаклӑ йышши тумсем унӑн, ылтӑн сехетсем, ҫӗрӗсем, хӑлха ҫаккисем. Е нимӗн те курмастӑр-и эсир? Эсӗ илсе патӑн-и?

**Караҫҫӑм.** Эпӗ вӑл вӗреннӗ чухне укҫа шеллесе тӑман.

**Костя.** Ниҫта та вӗренмен вӑл. Укҫалла суя диплом илнӗ Сан кӑмӑлна хуҫас мар тесе. Тӗрмере манпа пӗрле ларнӑ пӗр ача туса панӑ ӑна диплом.

**Елис.** Тупата туршӑн, мӗн калаҫатӑн эсӗ, Костя?

**Караҫҫӑм**. Суя, пӗтӗмпех суя!

**Костя.** Ку ҫеҫ те маар-ха, хулара унӑн виҫӗ пӳлӗмлӗ хваттер те пур, машина...

**Караççăм.** Ĕненместĕп эпĕ сана. Анна, кала вăл суять тесе. Кала, кунта пурте хамăрăннисем. Кала вăл суять тесе. *(Аня чĕнмест, ăшĕнче ĕсĕклет.)*

**Елис.** Тĕрмере ухмаха ернĕ вăл, кантуж пулнă ăна. Вăл хăй мĕн каланине хăй те ăнланмасть.

**Караççăм.** Эпĕ сана халех тыттарса яратăп.

**Игорь**. Аня, мĕнле-ха капла? Вăл суять вĕт.

**Аня.** Кураймастăп эпĕ, пурсăра та кураймастăп... Çак тĕнчене те кураймастăп. Пĕтĕм пурнăç укçа çинче тытăнса тăнишĕн кураймастăп. Хама мĕн кирлĕ, пĕтĕмпех илме пултартăм эп çак пурнăçра, ылтăнсем, тумсем, машина, хваттер...

**Караççăм.** Мĕнле майпа? Кам укçипе?

**Аня.** Телей çеç çук манăн. Ăна укçалла илме çук. Игорь, тусăм, ан пăрах манна. *(Игорь умнее чĕркуçленсе ларать.)* Эпĕ пĕтнĕ çын маар. Эпĕ сана телейлĕ тăвăп. Ан пăрах манна. Пĕрре те ĕçлемесен те виçĕ ĕмĕр пурăнма çитет манăн укça.

**Караççăм**. Ĕненместĕп. Эсир пурте ухмаха ернĕ. Мĕн пулса иртет кунта? Çынсемех-и эсир? Хăрушă тĕлĕк пуль ку.

**Аня.** Атте, каçар мана. Анне, эсĕ те каçар. Костя тĕрĕсне калать.

**Караççăм.** Вĕлеретĕп! *(Аняна ярса илет.)*

**Елис.** Турăçăм...

**Караççăм.** Хам çуратнă, хамах вĕлеретĕп.

**Елис.** Караççăм... *(Караççăма чараççĕ.)*

**Караççăм.** Ан чарăр мана! Вĕлеретĕп ăна. Мана намăс кăтартрĕ вăл. Чи юратнă хĕр намăс кăтартрĕ, тĕнчене шăнăçайми намăс кăтартрĕ. Кай кунтан! Тасал ман кил-çуртран! Эсĕ манăн хĕр мар.

**Елис.** Караççăм, тăна кĕр. Анна...

**Аня.** Ну, мĕн, кăмăлу тулчĕ-и? Çакна курассу килчĕ-и санăн? *(Костяна çупса ярать).* Эсĕ айăплă, пĕтĕмпех эсĕ айăплă.

**Караççăм.** Кайăр, пурте кайăр. Никама та курассăм килмест. *(Маруçа.)* Эсĕ те кай! Эсир манăн хĕрсем мар.

**Елис.** Караççăм, мĕн калаçатăн?

**Маруç.** Атя, Игорь, кайрăмăр.

**Елис.** Маруç, хĕрĕм, ылтăнăм. Пăрахса ан хăвар пире.

**Маруç.** Анне, эпĕ халь тин Игорьтен юлмастăп. Каçарăр мана.

**Караççăм.** Ултавçăсем эсир. Мана, тăван аçăра улталаса пурăннă*. (Игоре.)* Мĕн тума килсе килтĕн эсĕ манн çурта? Манăн чыса варалама-и? Пĕрне çураçма килетĕн, теприне илсе каятăн. А эсĕ пĕлетĕн-и унăн ача пурине?

**Елис.** Караççăм...

**Игорь.** Эпĕ пĕтĕмпех пĕлетĕп, ашшĕ. Нимĕнле военкомата та кайман эпĕ çнер, ача çуртне кайса килтĕм. Сан мăнукна та куртăм. Намăс çинчен калаçатăн, чыс çинчен. Ху вара хĕрне тăван ачинчен уйăратăн, мăнукна - амăшĕнчен.

**Караççăм.** Веçех пăтранчĕ, пĕтĕм пурнăç пăтранчĕ Эсĕ кунта килсе кĕнĕренпе. Кайăр кунтан, пурте кайăр.

**Елис.** Караççăм, ан хăвала хăвăн ачусенчен.

**Игорь.** Ку сăмах вырăнне пехил сăмахĕ илтмеллеччĕ те, пулмарĕ. Атя, Маша, кайрăмăр.

**Караççăм.** Никама та пехиллеместĕп эпĕ. Кайăр.

**Елис.** Мĕнле-ха капла, Маруç, кĕрӳ... кун пек кăларса ямастăп эпĕ. Çын ретлĕ тăвар, караççăм. Урăх те кураятăп сана, те кураймастăп. КАçар манна, хĕрĕм... *(Маруç умне ларса йĕрет.)*

**Маруç.** Чипер юл, анне. Чипер юл, атте. Каçарăр мана.

**Елис.** Маруç!

**Аня**. Игорь!

**Игорь.** Каçар манна, Игорь. Эсĕ килĕшрĕн мана, анчах чăн юрату çукчĕ. Эпĕ Машана...

**Аня.** Эсĕ ху каçар мана. Атте, пехилле вĕсене. Вĕсем таса çынсем.

**Караççăм.** Çук, вăл манн сăмахран иртсе качча каять. Манран пехил сăмахĕ илтеймĕ.

**Аня.** Эппин хам пехиллетĕп. Анчах та пехил сăмахĕ каланă чухне качча каякан хĕр пĕркенчĕк айĕнче лараканччĕ. Игорь, эсĕ кунта хăвăн фатуна мантарса хăваратăн. *(Сумкинчен çĕçĕ кăларать, кайран фата кăларса çĕççинее унпа хуплать).* Ме, тăхăнтар ăна Маруçа. *(Сасартăк улшăнса.)* Игорь, эсĕ манăн! Манăн! Илсе кай мана хупа пĕрле, ан пăрах мана. Эпир телейлĕ пулăпăр.

**Игорь.** Çук.

**Аня.** Памастăп эпĕ сана никама та! *(Игоре çĕçĕпе чикет. Игорь черкусленсе ларать.)*

**Игорь.** Маша! Мĕн ку? Маша...

**Маруç.** Игорь! *(Игоре ыталаса илет.)* Турăçăм... *(Аняна.)* Мĕн туса хутăн эсĕ? Игорь, Игорь теп, ан вил... Хама паян пирвайхи хут телейлĕн туйса илнĕччĕ, унта та телей нумайа пымарĕ. Игорь, юрататăп эпĕ сана, ан пăрахса хăвар мана...

**Игорь.** Маша, телейлĕ пул... *(Вилет.)*

**Маруç.** Иго-о-орь!!!

Вĕçĕ.

Шăмăршă, 1992 çул.